Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 16 БИТЛАРИКУН 188 (5001) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пер №-ре 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—3—85, ялхуçалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Парти кандидачĕсене большевикла воспитани парасси

Парти ӳсĕмĕ уйрăмах йулашки уйăхсенче вăйланчĕ. 1938 çулăн малтанхи 6 уйăхĕ хушшинче парти кандидатне çĕнĕрен 383 çын, парти членне 215 çын илнĕ. Çакă вăл партин организацийĕ, политикăлă-массăлă ĕçĕсем вăйланни çинчен, партипе масса хушшинчи çыхăну вăйланни çинчен, уйрăмăн иасен—парти кандидачĕсем, сочувствуйушчисем, комсомол хушшинчи ĕçсем лайăхланни çинчен калать. Апла пулсан та ençр парти ӳсĕмĕ çителĕклĕ ыран теме пултараймастпăр-ха. Йепреç, Çĕрпӳ, Ишлей парти организацисенче 1938 çула кĕнĕренпе пурĕ те парти членне çĕнĕрен 2—3-шер çын çеç илнĕ. Кӳçĕн Йелчĕкне Кувакинă районĕсенчи парторганизацисенче пĕрер çынна парти членне илнипех лапланса ларнă. Хăш пĕр райкомсем, пуçламĕш организацисем парти кандидачĕсемпе ĕçлессине, вĕсене большевикла воспитани парассине çителĕклĕ хакламаççĕ. Çакăн çинчен уйрăм парторганизацисенче 1926—28 çулсенчен вара çаплах кандидатра тăракан йулташсем те сайра хутра мар тĕл пулни лайăх каласа парать. Акă Шăмăршă районĕнчи хатĕрлев кантурĕнче ĕçлекен Безрукăв йулташ 1928 çултанпа парти кандидатĕнче тăрать. Шупашкарти типографи çуменчи пуçламĕш парторганизацинче Коротковă йулташ 1926 çултанпа, Ковалевский йулташ 1930 çултанпа кандидатра тăраççĕ. Çав вăхăтрах пуçламĕш парторганизацисем вĕсене парти членне илес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ, парторганизаци руководителĕсем вĕсене хăйсен кусĕнчен çухатнă: парти поручениисем памаççĕ, партин активлă ĕçне хутшăнтармаççĕ. Çитменнине та-а асăннă коммунистсем хăйсем те ниçта та вĕренмеççĕ. Кун пек фактсене темĕн чухлĕх кăтартма пулать.

Парти организацисен задачи вăл —çĕнĕ членсене, кандидатсене сочувствуйушчисене большевисăмпа хĕçпăшалланма кулли пулăшса пырасси пулать. Уйрăмах—нумай вăхăт хушши кандидатра тăракан йулташсем хушшинче ĕçлессине вăйлатмала. Вĕсене партин активлă пурнăçне тата общественлă ĕçе хутшăнтарса тата идейлă политикăлă воспитани парса Ленин—Сталин аслă партийĕн членĕ йатне илме тивĕçлĕ çын тумала. Парторганизаци руководителĕн кандидатсене парти вĕревĕвне хутшăнтарнипех чарăнса тăмала мар, вĕсем мĕнле вĕреннине тăтăшах тĕрĕслесе пымала, большевисăмпа хĕçпăшалланас ĕçре тĕл пулакан йăварлăхсене пĕтерме пулăшмала, вĕренме кирлĕ условисем туса памала, хушнă ĕçе кандидат мĕнле тунине тĕрĕслесе тăмала тата ĕçре пулăшмала. Партилĕ общественлă ĕçре, вĕревӳре парти кандидачĕ политикăпа идейă йенчен ӳсет, унăн активлăхе, революцилле çирĕплĕхĕ, большевикла сыхăлăхĕ хапарать, вăл тăшмансене палласа илсе пĕтерме вĕренет, парти членĕ йатне илме тивĕçлĕ пулать.

Сахал мар ПСК(б)П райкомĕсемпе пуçламĕш парторганизацисем парти кандидачĕсене члена кĕме пулăшас вырăнне, парти членне кĕме панă зайавленисене уйăхе уйăхĕпе пăхмасăр выртатараççĕ, партине илнисене парти документчĕсене вăхăтра йеркелесе памаççĕ. Акă, Маркосăв йулташ (Чебторг) 1932 çултанпа парти кандидатĕнче тăрать. Вăл 1936 çултах парти членне кусма зайавлени панă. Ку ыйтăва 6—7 хут парти пухăвĕнче пăхса тухнă, рекомендателсене темиçе хут улăштарнă. Йулашкинчен 1938 çулти июль уйăхĕнче ăна парти членне кусарма йышăннă, анчах пуçламĕш парторганизацинче документсене йеркелемен пирки ăна члена çирĕплетесси çаплах тăсăлать.

Çĕнĕ Чукалри (Шăмăрша районĕ) Колова йулташ пĕр çулталăка йахăн парти членне кусаймасăр тăнă. 1937 çулти сентябер уйăхĕнчен пуçласа 1938 çулхи апрел уйăхне çитиччен вăл члена кĕрес пирки райкома 4 хутчен çитнĕ. Çак сăлтавсем вĕсем, паллах, парти членне кĕрес ĕçе чăрмантармасăр тăма пултараймаççĕ. Парти членне илес ĕçри волокитăна тĕппипех пĕтерес пулать.

Парти организацисен уйрăм кандидатсене рекомендаци паракансене тупма пулăшас пулать. ПСК(б)П райкомĕсен партине кĕме рекомендаци тупайман йулташсем çумне районри парти активĕ членĕсене çирĕплетсе рекомендаци тупма пулăшасси çинчен шухăшласа пăхни кирлĕ.

Парти кандидачĕсене большевикла воспитани парасси кашни райкомăн, кашни пуçламĕш парторганизацин пысăкран та пысăк задачи пулса тăрать. Парти кандидачĕсемпе ĕçлессине, вĕсене кулленех вĕрентсе большевикла воспитани парса пырассине тĕппипех лайăхлатса, кандидатсене парти членне илес ĕçе вăйлатмала.

Хасан кӳлли районĕнчи событисем çинчен

ССР Союзĕн тата Йапони çар представителĕсем августăн 11-мĕшĕнче вĕррĕмĕш хут тĕл пулнă чух, ССР Союзĕн çар представителĕсем çакна каланă: августăн 11-мĕшĕнче 13 сехет те 30 минутра (вырăнти вăхăтпа) вăрçă ĕçĕсене чарса лартнă пулсан та, Йапони çарĕсен пĕр пайĕ мир çинчен тунă килĕшĕве пăснă, мир тунипе усă курса, 100 метр малалла кусна. Заозернăйа (Чанкуфын) высотин сурçĕр йенчи сĕвекĕн пĕр пайне йышăннă. ССР Союзĕн çар представителĕсем протест панă пулсан та тата Йапони çарĕсене çийĕнчех хăйсен халиччен позицийĕсем çине илсе кайма ыйтнă пулсан та, Йапони çар представителĕсем çак саккунлă требованине пурнăçа кĕртме татăклăнах килĕшмен. Çав кăтартнă участок çинче икĕ йенĕн çарĕсем пĕр-пĕрин патне 4—5 метр таран çывхарса тăнине пула тата кашни самантрах вăрçă ĕçĕсем ăнсăртран çиксе тухма пултарнине кура, икĕ йенĕн çар представителĕсем çав участокра икĕ йенĕн çарĕсене те 80 метр кайала илсе каймала тунă. Çакăн çинчен пĕлтерниче илнĕ, хыççăн Инçет-Хевелтухăçĕнчи совет командованийĕ мир çинчен тунă килĕшӳ тăрăх, хамăрăн чаçсене çийĕнчех хăйсем халиччен йышăнса тăнă позицисем çине—вĕсем августăн 10-мĕшĕнче 24 сехетре йышăнса тăнă позицисем çине кусарма распоряжени панă, тата Йапони представителĕсенчен Йапони çарĕсене унтан илсе кайма ыйтма катарса панă. Çак распоряженине пирĕн командовани çийĕнчех пурнăçа кĕртнĕ.

Çавăнпа пĕрлех Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинов йулташ Йапони посолне г. Сигемицуна Йапони çарĕсем мир тунине çапла пăсни çине кăтартса панă, вĕсене çав участок çинчен 100 метртан кайа мар кайала илсе кайма ыйтнă, çакна тумасан вара ССР Союз правительстви мир туни Йапони айăпĕпе пăсăлнă тесе шутлĕ, тесе асăрхаттарса хунă.

Хальхи вăхăт тĕлне Йапони çарĕсене çав çулте кăтартнă пунктран илсе кайнă.

Августăн 12-мĕшпе 13-мĕшсенче ССР Союзĕн тата Йапонин çар представителĕсем çĕнĕрен тĕл пулнă, вĕсем икĕ йенĕн çарĕсем мĕнле вырăнта тăнине тĕплĕн палăртнă. Анчах августăн 13-мĕшĕнче ССР Союзĕн çар представителĕсем икĕ йенĕн çарĕсем мĕнле вырăнта вырнаçса тăнине палăртакан протоколсемпе картă çине алă пусма сĕнсен, Йапони представителĕсем çавна тума килĕшмен, вĕсем: епĕр хамăрăн аслă начальствăран кăтартусем кĕтетпĕр, ăна тума урăх тата авторитетлăрах комиççи илсе çитет пулĕ, тенĕ.

Çакăн хыççăн икĕ йенĕн çар представителĕсем уйăрăлса кайнă.

Августăн 14-мĕшĕнче çĕнĕ тĕл пулусем пулман.

Конфликт пулнă районта хальлăпка.

Августăн 13-мĕшĕнче Йапони çар представителĕсен сĕнĕвĕ тăрăх тата ССР Союзĕн çар представителĕсем килĕшӳ панă тăрах вилĕсене пĕр-пĕрине улăштарса илнĕ. Командовани шута илнĕ тăрăх, Совет йенĕнчи вилнисем 236 çын тата аманнисем 611 çын пулнă.

Пирĕн командовани палăртнă тăрăх, Йапони çарĕсен 600 çынна çити вилнĕ тата 2500 çынна çити аманнă.

(ТАСС).

Августăн 14-мĕшĕнче пулнă ларусен дневникĕ

Союз Советĕнче

Августăн 14-мĕшĕнче ирхине Союз Совечĕн 4-мĕш ларăвĕ уçалать.

ССР Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бӳджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх пренисем малалла пыраççĕ.

Депутат Вирендйакин Мордва АСС Республикин çитĕнĕвĕсем çинчен калать. Йулашки пилĕк çул хушшинче кăна Мордва АССР бӳджечĕ 4 хут ытла ӳснĕ. Кăçалхи çул республикăн пĕтĕм бӳджет средствисенчен 77 процентне социаллă-культурăлă ĕçсем тунă çĕре кайать.

Ленинградпа Ленинград облаçĕ ĕлĕк пĕтĕм патша Российĕ мĕн чухлĕ кăларса тăнă—çавăн чухлĕ промышленнăç продукцийĕсем туса кăлараççĕ, тет депутат Никитин. Ленинградпа Ленинград облаçĕн промышленнăçĕ хамăр халăх хуçалăхне малта пыракан техникăпа пуйанлатать кăна мар, вăл тата Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне хĕçпăшалланма кирлĕ чи лайăх средствăсем парса тăма та пултарать.

Ленинградăн тăтти-сыпписĕр ӳссе пыракан бӳджечĕ 1938 çулта 1.140 мĕлйун тенкĕ пулать. 1913 çулта кивĕ Петербурган бӳджечĕ пурĕ те 47 мĕлйун тенкĕ çеç пулнă.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Аслă шкул ĕçĕсен комитечĕн Председателĕ Кафтанăв йулташ пренисенче тухса каласа çакна палла тунă: капитализмлă çĕршывсенче пуринче те çынсем аслă шкулсенче вĕренесси хытă чакса пырать.

ССР Союзĕнче аслă шкулта 550 пин çын—Иевропăри капитализмлă 23 çĕршывсенчи вĕренекенсенчен те нумайрах вĕренеççĕ.

Çĕççире çирĕплетме тăратнă бюджет тăрăх çынсене аслă шкулсенче вĕрентес тĕлĕшпе тăвакан расхутсем, 1934 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытла ӳсеççĕ.

Йулашки сăмах илсе ССРС Финанс Халăх Комиссарĕ Зверев йулташ тухса калаçать.

Зверев йулташ: ССР Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бюджетне, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнăскере пурте пĕр çын пек пĕр кăмăллă пулса ырларĕç, тесе палла тăвать.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Бӳджет Комиççин сĕнĕвĕсене—бӳджетăн доходпа расхут пайĕсене ӳстересси çинчен панă сĕвӳсене ырăнлă та усăлă тесе шутлать, тет Зверев йулташ.

Уйрăм халăх комиссариачĕсен ĕçĕсем пирки пулнă критикăлă асăрхаттарусем çинчен каласа, Зверев йулташ Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе çапла калать: Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çав критикăлă асăрхаттарусене пурне те шута илет тата халăх комиссариачĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тăвать.

Зверев йулташ хыççăн йулашки сăмах илсе, Союз Совечĕн Бӳджет Комиççи Председателĕ депутат Çидăрав тухса калать.

Çидăрав йулташ çапла калать: çĕршыв оборонине тĕреклетме 27 мĕлйард тенкĕ панине бӳджета сӳтсе-явнă чух уйрамах ырларĕç. Ку вăл тăван çĕршыва вĕçĕ хĕррисĕр йуратнине, Хĕрлĕ Çарăн, Сывлăш тата Тинĕс-Çар Флочĕн хăватне пурте пĕр кăмăллă пулса çирĕплетессшĕн тăрăшнине кăтартса паракан тĕслĕх. Ку вăл—пирĕн пĕтĕм халăх кирек мĕнле тăшмана та отпор пама хатĕр тăнине кăтартса паракан тĕслĕх. Çидăрав йулташ сăмахне тăвăллăн алă çупса саламлаççĕ. Сталин йулташа тата Совет правительстви пуçлăхне Молотăв йулташа чысласа, депутатсем оваци тăваççĕ.

Профсоюзсенче ĕçлекен депутатсен ушкăнĕнчен депутат Николаева, социаллă страховани бӳджетне ССР Союзĕн пĕтĕм государствă бӳджетне кĕртме сĕнӳ парать, мĕншĕн тесен вăл средствăсем государствăлă средствăсем пулса тăраççĕ, вăл средствăсем государствă бӳджечĕ ĕççынни массисене материаллă тата культурăлă пулăшу парас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене тунă çĕрех кайаççĕ. Союз Совечĕ ку сĕнĕве пĕр саслăнах йышăнать.

„Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бӳджечĕн саккуне", кашни статйине уйрăмăн вуласа, Союз Совечĕ пĕр саслăн йышăнать.

Союз Совечĕпе Националнăçсен Совечĕн 1938 çулти августăн 10-мĕшĕнче пулнă пĕрлешӳлĕ ларăвĕ
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лару президиумĕ (сулахайран): Т. Д. Лысенко, А. А. Андрейев, Н. М. Шверник тата Г. Асланова йулташсем.
Й. Халип фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Националнăçсен Советĕнче

Августăн 14-мĕшĕнче каçхине Националнăçсен Совечĕн 4-мĕш ларăвĕ уçалать.

Пренисенче чи малтан депутат Краснов (Чăваш АССР) тухса калаçать. Бӳджет пройекчĕшĕн тăрса, Краснов йулташ çапла калать: хамăр тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме 27 мĕлйард тенкĕ пама сĕнине ĕççыннисем уйрамах савăнса та кăмăлласа кĕтсе илеççĕ.

— Рабочисемпе хресченсен социалисăмла государствин бӳджечĕ,—тет ССРС Государства План Комиççи председателĕ Вознесенский йулташ,—тĕнчери чи тĕреклĕ те çирĕп бӳджет пулса тăрать. Пирĕн бӳджетăн çирĕплĕхĕ пĕтĕм халăх хуçалăхĕ тăтти-сыпписĕр ӳссе пыни çинче никĕсленсе тăрать. Кăçалхи çулăн пĕр, еммĕш çурçулĕнче промышленнăç продукци ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕ уйăхран уйăха ӳссе пычĕ. Июнь уйăхĕнче пĕтĕм промышленнăç продукцийĕ, пĕлтĕрхи июнь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 17,8 процент ӳснĕ, йăвăр промышленнăç продукцийĕ—23,3 процент ӳснĕ.

Промышленнăç продукцийĕ кăларас тĕлĕшрен ССРС тĕнчери иккĕмĕш вырăна çирĕппĕн йышăнчĕ. Совет Союзăн калама çук нумай апат-çимĕç ресурсĕсем пур. Фашисла агрессăрсене хирĕç тухма ССР Союзĕнче металл пур! ССР Союзĕнче хамăрăн танксемпе самолетсем, вальни çунгармали йапаласем пур. Совет Союзĕнче хамăрăн пăттăр Хĕрлĕ Çара материаллă хĕçпăшаллантарма мĕн кирли пăлтах пур,—тет Вознесенский йулташ.

Пренисенче йулашкинчен депутат Казакпайев (Казах ССР) тухса казахла калаçать. Правительствă тăратнă 1938 çулти бӳджета ырласа, Казакпайев йулташ çапла калать: бӳтжет хамăрăн аслă Совет Союзĕнчи пур нацилĕ республикăсен интересĕсене те туллин палăртса тăрать, тет.

ССРС Финанс Халăх Комиссарĕ Зверев йулташ йулашки сăмах илсе, çакна пĕлтерет: ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Бӳджет Комиççийĕ панă сĕнӳсене—бӳджетăн доход тата расхут пайĕсене ӳстересси çинчен панă сĕнӳсене хирĕç мар, тет.

— Верховнăй Совет депутачĕсем чылай халăх комиссариачĕсен ĕçĕсене критиклерĕç. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ,—тет Зверев йулташ,—мана çакна калама хушрĕ: Çав халăх комиссариачĕсен финанс ĕçĕсемпе производствăлă ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе сывăх вăхăтрах татăх конкретлă ĕçсем тăвать.

Малалла йулашки сăмах илсе, Националнăçсен Совечĕн бӳджет Комиççи председателĕ депутат Хохлов тухса калать.

— Пирĕн бӳджет,—тет вăл,—нумай нацилĕ совет халăхĕн интересĕсене палăртса тăрать.

Çессине усăва вăхăт Йапони агрессăрĕсем пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чиксем çине тапăннипе пĕр вăхăт тĕлне пулчĕ. Калас пулать, Верховнăй Совет Çессийĕ хăй ларăвĕсене большевикла лăпкăлăхпа иртерет, хăйне хăй большевикла шанса тăрса, хăйĕн тивĕçлĕхне лайăх тытса тăрать. Хамăр правительствă хушнă тăрăх Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă паттăр фронтăн бойецсем, пирĕн Совет Союзĕн таса чиккисем çине тапăнма хăтланакансене пурне те тĕппипех çапса салатрĕç.

Совет халăхĕн моральлĕ политикăлă пĕрлĕхне, вăл Ленин—Сталин партийĕ тавра, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тачă пĕрлешсе пĕтĕçсе тăнине пирĕн Çессия пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса пачĕ.

Хохлов йулташăн çак сăмахĕсене депутатсемпе хăнасем нумайччен тăвăллăн алă çупса ырлаççĕ. Пур йенчен те: „Сывă пултăр аслă Сталин! Сталин йулташа—урра!" тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ.

Профсоюзсенче ĕçлекен депутатсен ушкăнĕн йачĕпе депутат Москатов социаллă страховани бӳджетне ССР Союзĕн пĕтĕм государства бюджечĕ шутне кĕртме сĕнӳ парать. Ку сĕнĕве Националнăçсен Совечĕ пĕр саслăпах йышăнать.

„Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бюджечĕн саккуне" кашни статйине уйрăмăн вуласа, Националнăçсен Совечĕ пĕр саслăн йышăнать.

(ТАСС).

Августăн 14-мĕшĕнче Националнăçсен Совечĕн ларăвĕнче П. Д. КРАСНОВ депутат каланă сăмах

Депутат йулташсем! Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн пĕтĕм государствă бӳджечĕ Советсен çĕршывĕнче пулса иртнĕ калама çук пысăк социаллă-экономикăлă улшăнусене палăртса тăрать, вăл бӳджета Совет Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессиниче пăхса тухма тăратрĕ.

Пĕтĕм государствă бӳджечĕн пройекчĕ Совет Союзĕн хăвачĕ тăтти-сыпписĕр ӳссе пынине, ĕççынни массисен пурнăçĕ малалла та лайăхланса пынине, пирĕн тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхĕ вăйланса пынине ĕнентерӳллĕн кăтартса парать.

1937 çулпа танлаштарсан, капиталлă ĕçсем тунă çĕре йаракан укçа 1938 çулта 30 процент ытла ӳсет. Союзри тата республикăсенчи промышленнăçăн пĕтĕм продукцийĕ 21 процент, таварçаврăнăшĕ 12,4 процент ӳсет. Çак вăл Советсен çĕршывĕнче çеç пулма пултарать, кунта рабочисемпе хресченсем большевикла парти тата халăхсен аслă çулпуçĕ, учителĕ—Сталин йулташ йертсе пынипе социалисăм тăваççĕ.

Совет Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пирĕн совет çĕршывĕн оборонă пултарулăхне малалла тĕреклетсе пырас ĕçсем валли 27 мĕлйард тенкĕ укçа парасси çинчен каланă сĕнӳне епĕр чĕре туллин кăмăлпа кĕтсе илетпĕр.

Пирĕн совет çĕршывĕ хăйĕн оборонă пултарулăхне тĕреклетет —çакна фашисcемпе вĕсен тарçисем пĕлсе тăччăр. Совет Союзĕ фашиссен штыкĕсемпе тупписемшĕн нихçан пырса тĕкĕнеймен çирĕп крепăç пултăр тесе, епĕр нимĕн те хĕрхенсе тăмăпăр. Советсен çĕршывне аслă çулпуç Сталин йулташ йертсе пырать—çакна асра тытчăр (Алă çупаççĕ).

Çессине сӳтсе йавма ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă пĕтĕм государствă бӳджет пройектне кунта депутатсем тухса калаçнă чухне тунă асăрхаттарусемпе пĕрле Çесси пĕр шухăшлă пулса ырласа çирĕплетессе пирĕн ĕне пĕртте иккĕленместĕп.

Финанс Халăх Комиссариачĕ йенчен оперативлă та конкретлă йертсе пырассине лайăхлатма кирли çинчен, контрольпе ревизи ĕçне чĕртсе йама кирли çинчен депутатсем пит те тĕрĕс кăтартса пачĕç. Кунта совет организацисенче те, çавăн пекех хуçалăх, кооперации тата ытти организацисенче те финанс дисциплинине çирĕплетес ыйтусем çине тĕрĕс çавăрăнтарса пăхтарчĕç. Финанс çистеминче хăйĕнче те финанс дисциплинине чылай вăйлатас пулать. Пурте пĕлесçĕ, çак учĕткăра халăх тăшманĕсем сахал мар сăтăр турĕç. Финанс Халăх Комиссариатĕнчен хăйĕн çистемине çирĕплĕн, конкретлăн, диференциллĕ йертсе пыма ыйтас пулать.

Паллах ĕнтĕ, пирĕн те, вырăнсенче ĕçлекен работниксен, Финанс Халăх Комиссариачĕн органĕсене мĕн май пур таранах пулăшмала. Анчах та финанс органĕсен налог тӳлекенсем государствă умĕнчи хăйсен обйазательствисене тултарас тĕлĕшпе правительствă панă кăтартусене тата çирĕпрех пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Депутат йулташсем! ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕнче çирĕплетме тăратнă 1938 çулти бӳджет пройекчĕ ленинла-сталинла наци политикин аслă принципĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳлĕ. Бӳджет пройекчĕ Совет Союзĕнчи мĕн пур националнăçсен халăх хуçалăхне тата социалисăмлă культурине малалла ӳстерсе пымалла тăвать.

Ĕлĕкхи вăхăтра чăваш халăхĕ тĕттĕм, пусмăр çапса хĕснĕ, кайа йулнă халăх пулнă, вăл пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех вилсе пынă,—халĕхи вăхăтра чăваш халăхĕ тĕлĕйлĕ те хавасла пурнăçпа пурăнать. Совет Союзĕнчи халăхсен тăванлă çемйинче вăл коммунисăм общественин çуртне купалать. Пирĕн большевикла партин наци политикине вĕçне çитиех тата пĕр пăрканмасăр пурнăçа кĕртсе пыни Чăваш АСС Республикĕнче социалисăмлă промышленнăçа ӳстермеле турĕ.

Чăваш АССР промышленнăçĕн пĕтĕм продукцийĕ çирĕм çул хушшинче çирĕм икĕ хут ӳснĕ. Сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушшинче Чăваш республикинче çĕнĕ хуласемпе работи посолкисем çуралса тухрĕç. Промышленнăçа, ял хуçалăхне тата социаллă-культурăлă ĕçсене укçа-тенкĕ хурасси çултан çул ӳссе пырать. Иккĕмĕш пилĕкçулăхра кăна та промышленнăçа 100 мĕлйун тенке йахăн хывнă.

Рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксен шучĕ, уйрăмах вырăнти чăваш нацилĕ кадрĕсен шучĕ ӳссе пырать.

Ĕлĕк çапса хĕснĕ пулнă, çырма пĕлмен пулнă чăваш йалĕ хăйĕн сăн-сăпатне палламалла мар улăштарчĕ. Ĕлĕк сапаланчăк пулнă вак хресчен хуçалăхĕсем колхозсене кĕрсе пĕрлешнĕ. Акăнакан çĕр лаптăкĕн 90 процентне халь колхозсем акса тăраççĕ. Чăваш республикинчи йалхуçалăх машинăлăхĕсен çулсеренех ӳсе пырать.

Пысăк тухăçлă тыр-пулшăн, Сталин йулташ çулсеренех 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен панă кăтартăва пурнăçа

(Вуласа 2-мĕш страницăра).

Августăн 15-мĕшĕнче Националҫнăçсен Совечĕн ларăвĕнче П. Д. Краснов депутат каланă сăмах

(ЙУЛАШКИ)

кĕртĕссишĕн большевикла кĕрешсе, совет Чăваш республикĕ иртнĕ çула вăтам шутпа гектартан 90-шар пăт тĕштырă туса илчĕ. Колхозла çектăр вăтам шутпа гектартан 97-шер пăт тĕштырă туса илчĕ. Уйрăм колхозсем гектартан 200-шер пăт илчĕç, çав вăхăтрах коллективизаципченхи вăхăтра чăваш хресченĕсем гектартан 45–50 пăтран ытла тырă туса илеймен. Тырпул тухăçĕн çакăн пек ÿсĕмне ĕнтĕ социалисăмлă промышленнăç йалхуçалăхне трактăрсемпе, комбайнсемпе тата ытти йалхуçалăх машинĕсемпе хĕçпăшаллантарнипе тунă. Чăваш халăхĕн пурнăçĕ хаваслă, савăнăçлă, пуйан та культурăлă пулса тăчĕ. Унăн материаллă ырлăхĕ татти-сыпписĕр ÿссе пырат. Ĕлĕк çырăва пĕлмен çĕршыв—Чăваш республикĕ талкăшпех пурте çырăва пĕлекенсен çĕршывĕ пулса тăчĕ. Чăваш АСС Республикĕнче формипе нацилĕ, содержанийĕпе социалисăмлă культура калама çук хăвăртлăн ÿссе чечекленсе карĕ.

1913 çулта хальхи Чăваш республикĕн территорийĕ çинче вĕренекенсен шучĕ 29 пин çын пулнă, 1937—38-мĕш вĕренÿ çулĕнче—180 пин вĕренекен пулнă.

Пĕр вăтам шкулсенче кăна та 40 пин ача ытла вĕренет. Октябĕрти аслă революци пуличчен чăваш халăхĕн ывалĕсемпе хĕрĕсем аслă шкулсенче вĕренме пултарайман, хальхи вăхăтра республикăра тăватă аслă шкул пур, вĕсенче икĕ пин çын ытла вĕренет.

Чăваш халăхĕн ĕмĕртенхи усал тăшманне—трахома тĕпренех пĕтерчĕ. Ĕлĕк халăх 80 процента çити трахом чирĕпе асапланнă. Патша тарçисем трахома пĕтерме çук, унтан сыватма çук тесе шутланă. Патша саманинчен йулнă çак ылханлă чиртен халăха совет влаçĕ çăлса хăтарчĕ. Трахома пула суккăра йулнă нумай çынсене сыватнăшăн, ĕççынниссен сывлăхĕшĕн тăрăшнăшăн чăваш халăхĕ коммунисла партине тата хамăрăн çулпуçăмăр Сталин йулташа чунтан тав тăват. (Алă çупаççĕ).

Депутат йулташсем! Епĕр хамăрăн пур çĕнтерÿсене те коммунисла парти, унăн Ленинла-Сталинла Тĕп Комитечĕ тата партипе халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе кĕрешсе илнĕ. (Алă çупаççĕ).

Пире халăх тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринецсем, буржуаллă националиссем ирсĕрĕн сиен кÿмен пулсан, пирĕн республика иртнĕ 1937 çулта тунă çитĕнÿсем тата пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Çак ирсĕр çĕлен-калтасем саватсен программисене тултарас ĕçе чăрмантарнă, йалхуçалăхĕнче, культурă фронтĕнче сăтăр туса пынă, республикăри финанс хуçалăхне дезорганизацилесе пынă. Анчах ирсĕр тăшмансем йăнăшрĕç!

Николай Иванăвич Йежов йертсе пынипе Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн мухтавлă оргăнĕсем, рабочи клас, колхозри хресченсем тата совет интеллигенцийĕ пулăшса пынипе, тăшмансен тĕп

йависене çĕмĕрсе тăкса, тĕп туса хучĕç.

Пирĕн пысăк та пит кирлĕ задача—вредительствăран йулнă сийенсене часрах пĕтерессине пурнăçа кĕртесси, хамăр республикăри хуçалăхпа культура ÿсĕмĕн хăвăртлăхне нумай хут вăйлатасси пулса тăрат.

Чăваш АСС Республикĕн 1938 çулти пĕтĕм бÿджечĕ 130 мĕлйун тенкĕ пулат, 1937 çулта чăннипе тултăрнă бÿджет 112 мĕлйун тенкĕ пулнă. Çапла вара 1938 çулти бÿджет 18 процент ÿснĕ.

Чăваш республикĕнче социаллă-культурăлă ĕçсем тунă çĕре 95 мĕлйун тенкĕ кайат, ку ĕнтĕ унăн пĕтĕм бÿджечĕн 72 проценчĕ пулат.

Халăх тăшманĕсем нумай çулсем хушши Шупашкар хулине—Чăваш республикĕн столицине ÿсме чăрмантарса тăнă. Хулана лайăхлатса капăрлатас ĕçе, пурăнмали коммуналлă çуртсем тăвас ĕçе вĕсем пур майсемпе те чăрмантарнă.

7 çул хушшинче, 1930-мĕшпе 1938-мĕш çулсем хушшинче, ССРС правительстви калама çук пысăк пулăшу парса тăнипе епĕр пурăнмали коммуналлă çурт-йĕр строительствинче хальхи мĕн туниччен чылай нумайрах тума пултарнă. Çапла, Шупашкарта—республика столицинче çав çулсенче пурăнмали çуртсем сахал тунă. 1931—1932 çулсенче тума пуçланă водопроводпа канализацине халиччен те туса пĕтермен-ха. Паракан укçа-тенкĕ çултан çулах усă курмасăр йулат. Епĕр сойузла оргăнсем, халăх комиссариачĕсем умне, уйрăмăнах Коммуналлă хуçалăх халăх комиссариачĕ умне ыйту лартатпăр: пурăнмали çурт-йĕр тăвас ĕçре пире ĕçпе пулăшас пулат.

Епĕр çавăн пекех тата искусствăна аталантарса ÿстерес ĕçре пире пулăшу пама кирли çинче çавăрăнтарса пăхтарасшăн. Халăхăн ирсĕр тăшманĕсем пире ку ĕçре нумай сăтăр тунă. Халиччен те пирĕн республика столицинче театр çук. Епĕр ССРС правительствинчен пире çĕнĕ театр тăвас ĕçре пулăшу пама ыйтатпăр.

Депутат йулташсем! Йапони военщинин вăрçă кăларасшăн провокаци тăват, анчах вăл пирĕн территори çине кĕме хăйсан, тивĕçлипех туйанчĕ. Климент Йефремăвич Ворошилăв йертсе пынипе (алă çупаççĕ) паттăр та мухтавлă Хĕрлĕ Çар рабочисемпе хресченсен государстви çине тапăнма хăтланакансене мĕн кĕтнине ĕнентерÿлĕ çирĕп кăтартса пачĕ.

Чăваш халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне йуратат, вăл коммунисла партине тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа пĕтĕм чунĕпе-чĕрипе йуратса тăрат. (Алă çупаççĕ). Аслă Совет Сойузĕн тусла çемйинче пулса, пирĕн чăваш халăхĕ хамăр парти, правительствă тата йуратнă çулпуçăмăр Сталин йулташ пĕррехмĕш хут чĕнсенех тăшмансене аркатма тухат. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Йулса пыракан районсен асăрхаттарасса кĕтмеле мар

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сводки тăрăх, августăн 10-мĕшне республикипе мĕн пурĕ 330271 гектар йе пĕтĕм лаптăкран 80,4 процент вырса кĕртнĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ августăн 10-мĕшне пур культурăсене те вырса пĕтернĕ. Патăрйелпе Йелчĕк районĕсенче те вырмали нумайах йулман, вырмали пĕтĕм лаптăкран çав вăхăта 97 процент вырнă. Чылай районсем 90 процент таран вырса çитернĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр районсем йулашки пилĕк кунлăхра тырпулсене пухса кĕртес ĕçре пачах çителĕксĕр ĕçленĕ. Çĕмĕрле районĕ Хĕрлĕ Чутай районĕпе йунашар ларат. Иккĕшĕн хушшинче çанталăк йенчен те, уй-хирсем йенчен те нимĕнле уйрăмлăх та пулма пултараймаст. Çапла пулсан та Çĕмĕрле районĕнче мĕн пурĕ те 49,3 процент лаптăк çинче çеç вырса пĕтернĕ. Çавăн пекех Йетĕрне районĕ те чăтма çук кайа йулса пыни курăнат. Ишлей тата Канаш районĕсем те пит йапăх ĕçлеççĕ.

Комбайнсемпе ĕçлесси йенчен йулашки пилĕк кунлăхра кăшт улшăну пулнă темеле, çавах та вăл улшăну çителĕксĕр, комбайнсемпе усă курасси чылай йулса пырат: августăн 10 мĕшне комбайнсемпе пухса кĕртмели плана пурĕ 61,6 процент çеç тултарнă. Йелчĕк, Шăмăршă, Шăнкăртам районĕсенче плана тултарасси патне çитнĕ пулсан, Трак, Шупашкар, Çĕрпÿ тата Куславкка районĕсенче 30—40 процент çеç тултарнă. Тутаркаспа Ишлей тата Елĕк районĕсенче те комбайнсем йапăх ĕçлени курăнат.

Ку районсенче комбайнсем çителĕксĕр ĕçлени МТС дирекцийĕсем ку таранччен ĕçе йĕркелеме тăрăшманнинчен çеç те мар, хăшпĕр вырăнсенче комбайнсемпе ĕçлессине хирĕçле шухăшсем пулнинчен те килнĕ. Шупашкар районĕнчи 4-мĕш № комбайн (комбайнер Кудрин йулташ) августăн 7-мĕшĕнче „Урожай" колхозра 5—6 сехет хушши кăраççин илсе килеймен пирки ĕççĕр ларнă. Кунта комбайнпа вырма тикĕс мар участка уйăрса панă, ыраш уйĕнче ĕçленĕ чух комбайн патĕнче пĕр трактăр çеç пулнă, колхоз председателĕ Шефиновский комбайн патне хурал паман пирки, комбайнерăн кунĕпе ĕçленĕ хыççăн çĕрле хурал тăмала пулнă.

Висĕ республика хушшинчи ăмăрту договăрĕ тăрăх комбайнсемпе пирĕн 300-шер гектартан кайа мар пухса кĕртмеле. Çавна пирĕн комбайнерсем ытлашшипех пурнăçлама пултараççĕ. Кушманăвпа Чекушкин комбайнерсем кунне 30—35-шер гектар пухса кĕртме пултарни çавна аванах çирĕплетет.

Хĕрлĕ Чутай районĕ кĕлтесене капана хывас ĕçпе те республикăра малта пырат. Куваккинă, Шăнкăртам тата Патăрйел районĕсенче те ку тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Анчах каллех Ишлейпе Канаш тата вĕсемпе пĕрле Йĕпреç районĕсенче кĕлтесем çурри ытла уйрах лараççĕ. Трак, Турхан тата Çĕмĕрле районĕсенче те кĕлтесене капана хывас ĕç кайра пырат. Кăнтăр йенчи районсенчен уйрăмăнах Йелчĕк районĕ кайа йулнă.

Тепĕр 2—3 кунтан кĕраки ĕçĕ пуçланат. Чылай лашасем кĕракинче пулаççĕ. Çавăнпа та кĕлтесене çак кунсем хушшинчех турттарса капана хывса çитермеле. Пуш сăмахпа мар, тăкакпа чăннипех большевикла кĕрешес текен çĕрĕç оргăнĕсен руководителĕсен кĕлтесене капана хывса çитерес ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмала.

Чылай районсенче авăн çапас ĕç те çителĕклĕ сарăлайман. Республикипе мĕн пурĕ те 17,7 процент таран çеç çапни авăн çапас ĕçе хатĕрленессинче Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йенчен çителĕксĕр йертсе пынине те кăтартат. 400 сложнăй молотилкăран 70 молотилкă шкифсăр лараççĕ, вăхăтра йусаман пирки чылай молотилкăсем ĕçлеймеççĕ. Колхозсенчи молотилкăсемпе те çителĕклĕ ĕçлени çук.

Молотилкăсемпе талăкра 20 сехетрен кайа мар ĕçлемеле туса организацилемеле. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ авăн çапнă çĕрте ĕçлекен машиниссене, трактăриссене тата колхозниксене ĕçшĕн сделшчинă йĕркипе тÿлемеле тăвасси çинчен йышăннă постановленийе халех авăн çапакансем патне çитерсе, молотилкăсене пурне те мĕн пур пултарулăхĕ таран ĕçлеттермеле.

Авăн çапас ĕç çителĕксĕр пынă май, государствăна обйазательнăй йĕркепе тырă тăратасси те йулса пырат. Республикипе обйазательнăй йĕркепе тырă памали плана халь 27,9 процент çеç тултарнă. Хăшпĕр машинă-трактăрлă станцисем колхозсене халиччен расчот туса параймаи пирки, натурплатă тыррине 17 процент таран çеç панă.

Обйазательнăй йĕркепе государствăна тырă тăратас ĕçре уйрăмăнах йединоличниксем йулса параççĕ. Йединоличниксенчен чылайĕшĕ тырă вырса пĕтернĕ, хăшпĕрисем авăн çапса пĕтернĕ. Çапах та вĕсенчен хăшпĕрисем государствăна памали тырра леçме васкамаççĕ. Ку вăл районсенчи хатĕрлев оргăнĕсен инспекторĕсем çителĕксĕр ĕçленинчен те нумай килет.

Тырă вырса пĕтерессинче, комбайнсемпе усă курассинче, кĕлтесене капана хывассипе авăн çапассинче тата государствăна тырă парассинче йулса пынине хăвăрт пĕтермеле. Йулса пыракан районсенчи парти тата совет организацийĕсен руководителĕсем кирек кам йенчен тепĕр хут асăрхаттарассине кĕтмесĕр, çанăсене таварсах хĕрÿллĕн ĕçе тытăнса, йалхуçалăх çулне ăнăçулăн вĕçлессишĕн кĕрешмеле.

Ăмăртура—пысăк вăй

ЕЛĔК. Мăн Вылăри „Хĕрлĕ шуçăм" колхоз правлени тырпулсене пухса кĕме тухиччен ĕç планĕ туса хатĕрлерĕ. Çав плана колхозниксен пухăвĕнче тĕплĕн сÿтсе йавăрăмăр. Кашни пĕчĕк ĕçе шута илтĕмĕр. Çакăн пек туни пире уй ĕçĕнче чăрмавсем пулассинчен хăтарчĕ. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ çĕрте бригадăсем, звеносем тата колхозниксемпе колхозницăсем ăмăртса ĕçлерĕç. Çавна май, стаханăвĕцсен шучĕ те чылаях ÿсрĕ. Х. Романăвă, А. Петровă, А. Йефстафăйĕвă, Й. Максимăв, К. Романăв колхозниксем йалănах стаханăвла ĕçлесе пычĕç. Ăмăртура—чăн-чăнах пысăк вăй. Уйри тырпулсене кĕске срукрах вырса пĕтерсе, кĕлтесене итемсем çине турттарса кĕртрĕмĕр.

Çанталăк уйăр тăнă вăхăтра епĕр авăн çапса пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлетпĕр. Çакăнпа пĕрлех çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăнтăмăр. Кĕрхи тырăсем акмали участкăсене лайăх çемçетрĕмĕр. Çĕре çемçетмели инçамсемпе тĕрĕс усă куртăмăр. Вăрлăхсем хатĕрлерĕмĕр. Кăçал епĕр йалтах суртлă вăрлăхсемпе акса хăваратпăр.

Уйри тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕнĕ пекех, кĕрхи тырăсене те пысăк пахалăхпа акса хăваратпăр.

И. Тайабăв.
Н. Кузнецов.
М. Матвейĕвă.

Вăйлă тырпул туса илнĕ

Елĕк, августăн 12-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем августăн 12-мĕшне 18987 гектар пучахлă тырăсем вырнă, йе вăл 90 процент пулат. 63 колхозра пур тырпулсене те вырса пĕтернĕ.

126 колхозран 112 колхозра ыраш кĕлтисене турттарса капана хывса пĕтернĕ. Авăн çапас ĕç хĕрÿллĕн пырат.

„Хĕрлĕ Сормăвă", „Трудовик", „Доброволец" тата Жданăв йачĕпе тăракан колхозсем государствăна кĕрхи тырăсене тата çуртрисене парса татнă.

Колхозсенче кăçал тырпул тухăçлăхĕ мĕн чухлĕ пулнине палăртаççĕ. „Майăн пĕррĕмĕшĕ" колхозра вăтам шутпа кашни гектартан 20-шер центнĕр ыраш, Жданăв йачĕпе тăракан колхозра 17-шер центнĕр, „Доброволец" колхозра 17,5-шер центнĕр тĕштырă тухат.

В. Йефремăв.

Малти рете тухрĕ

Анаткасри (Йетĕрне р.) „Октябĕр" колхоз иртнĕ çулсенче тырпулсене уйран пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе кайа йулса пынă. Кăçал ĕçе тĕрĕс организациленипе уйхир ĕçĕнче „Октябĕр" колхоз районра малти рете тухма пултарчĕ. Тырпулсене тăккаламасăр пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕртрĕ. Уйри çĕмелсене турттарса капана хывнă. Халь авăн çапаççĕ. Государствăна ыраш тата çуртрисем парса татнă. Молотилкăсем патĕнче П. Н. Козлов, В. Ф. Федăрăв колхозниксем стаханăвла ĕçлесе пыраççĕ.

Колхозра 5 бригадă. Çак бригадăсем пур ĕçре те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртса ĕçлени колхоза кăçал малти рете тухма пулăшрĕ.

И. Попов.

Кĕлтесене капана хывса çитернĕ

Чĕнерти (Тутаркас р.) „Стрела" колхоз уйри тырпулсене тăккаламасăр, ăнăçлăн пуçтарса кĕчĕ. Уй ĕçĕнче ăмăртса ĕçлени, стаханăвла йухăма сарса пыни ĕçе пысăк пахалăхпа туса иртерме пулăшрĕ.

„Стрела" колхоз уйри кĕлтесене турттарса, капана хывса çитерчĕ. Çавнашкалах тата государствăна пур культурăсем тăрăх та тырă парса татрĕ. Халь бригадăсенче авăн çапас, кĕракине хатĕрленес ĕçсем хĕрÿллĕн пыраççĕ.

Тырпулсене жнейкăсемпе, алăпа вырас, вырнă кĕлтесене çыхас, кĕлтесене турттарас ĕçсенче стаханăвĕцсем йышлăн палăрчĕç. А. Авдейĕвă, Ç. Васильĕвă, Ç. Наньякова, Н. Филиппăвă алăпа вырас нормăна икшер хут ытларах тултарса ĕçлерĕç. П. Калинин, Й. Вишньяков машиноведсем кулленхи нормăна 150—180 процент таран тултарса пычĕç.

П. Васильĕв.

Кĕракине йапăх хатĕрленеççĕ

Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ йышăннă тăрăх, Патăрйел районĕнчи колхозсен кĕрхи тырăсене августăн 17—23 мĕш хушшинче акмала. Кĕрхи тырăсене акма тухас вăхăт çитсе тăчĕ. Анчах Патăрйел районĕнче кĕрхи тырăсене акма тухма пит йапăх хатĕрленеççĕ-ха. Уйрăм колхозсем ку ĕçе пачах та хатĕрленмен темелле. „Первомайск" колхозăн 4 сейалкă, вĕсем пĕри те ĕçлеме йурăхлă мар. Ку вăхăтченех вĕсене йусаман. Çавнашкалах акма вăрлăхсем те хатĕрлемен.

Вăйлă тырпул туса илес тесен çĕре лайăх çемçетмеле, паха вăрлăхсемпе акса хăвармала. Анчах, „Первомайск" колхоз çĕре çемçетмели йапаласене пĕртте кÿрсе килмен.

Н. Квасăв.

М. В. Водопйанăв

ССР Сойузĕ—хăватлă авиацилĕ державă

Пирĕн авиаци çамрăк. Вăл патша Рассийĕнчен йулнă авиацин татăк-кĕсĕкĕсем çинче çуралнă.

Граждан вăрçи çулĕсенче шурăгвардейĕцсем сывлăшран тапăннине совет льотчикĕсем „Илйа Муромец" йатлă тăватă моторлă пысăк самольотсемпе хирĕç тăнă, тăшмансен тылне шала вĕçсе кĕнĕ. Машинсем кивĕ, вуншар çĕрте сапланнă пулнă.

Йăвăр нуşçулсенче пурăннă ун чухне пирĕн çĕршыв. Интервентсем, шурăгвардейĕцсем кÿнĕ сурансене аран-аран сыватса пынă. Ун чухне самольотсем тума вăл çитмен. Епĕр ун чухне „Илйа Муромец" пек шанчăксăр сывлăшри карапсем пуррисе те савăннă.

Пĕтĕм тĕнчери вăрçă хыççăн, Хĕвеланăç Йевропă самольотсемпе пассажирсене тата пуштă çÿретнĕ çĕрте усă курма пуçланă.

Пирĕн хамăрăн авиаци промышленнăçĕ пулман, хамăрăн самольотсем тата çителĕклĕ таран хамăрăн пилотсем те пулман.

Çапах та 1921 çулта Мускавпа Харькăв хушшинче сывлăш тăрăх пуштă çÿретмели çул уçнă. Чăн, ку çул лайăх ĕçлеймен. Вĕçсе тухса каймали, вĕçсе килмели сехетсен расписанийĕ пулман. Унчухне вăл туни те усăллă пулман. Расписани çинчен унчухне сăмах та пулма пултарайман, тăман йе сывлăшри пăсăк хумкану самольотсене ирĕксĕрех çĕре анса лартарнă. „Илйа Муромец" сехетре 100—110 километртан ытла вĕçеймен. Пирĕн

льотчиксен те çителĕклĕ опыт пулман. Пирĕн авиаци вăл вăхăтра мĕн тума пултарнине палăртас тесен, пĕр çакна каласан та çитет: Сарапул—Мускав хушшинчи вĕçеве, питĕ нумайччен хатĕрленчĕç пулсан та, иртерейменĕç.

Паллах ĕнтĕ ку ĕç малашне те тăтăшах çакăн пек тăрса йулма пултарайман. Аслă çĕршывăн талкăшне çĕнсе илме пире самольот кирлĕ пулнă. Сывлăшри çыхăнăва йĕркелесси халăх хуçалăхне социалисăмла çĕнетес тата аталантарас ĕç планĕн уйрăлми пайĕ пулса тăнă.

1923 çул—пирĕн граждански авиаци çуралнă çул. Сывлăш тăрăх çÿретес тĕлĕшпе ĕçлекен çĕнĕрен тунă обшчĕствă Мускав—Чулхула (Горький) хушшинчи сывлăш çулне уçрĕ. Çак çул тăрăх çÿреме нимĕçсен „Йункерс" йатлă фирминчен самольотсем туйаннă пулнă. Анчах пассажирсене çÿретмели йăвăр „Йункерсем" Совет Сойузĕн çĕр талкăшне килсе ларсан, вĕсем çинче вĕçме пултаракан никам та пулман.

Тин çеç çуралнă граждански флотăн пилочĕсем—пĕтĕмпех çар льотчикĕсем пулнă, пассажирсем çÿремели йăвăр машинĕсене вĕсем пĕлмен. Вĕсенчен хăшпĕрисем, пултаракансем, „Йункерса" хăвăрт вĕренсе çитрĕç. Ытти самольотсемпе вĕçмешшĕн, çавăн пекех тата пирĕн льотчиксене вĕрентмешкĕн йут çĕршывсенчи льотчиксене чĕнсе килмеле пулнă.

Анчах епĕр йутçĕршывран килнĕ çынсен кусĕнчен нумай пăхман. Пирвайхи сывлăш çулне уçнипе пĕрлех „Добролет" хамăрăн льотчиксен кадрĕсене хатĕрлес ĕçе йĕркелесе йачĕ. Техникă ÿснипе пĕрлех çĕнĕ çын та ÿснĕ. Совет çĕршывĕ хăйĕн чаплă мăстăрльотчикĕсене вĕрентсе çитĕнтерчĕ. 1924 çулта хута йанă сывлăш çулĕсенче, експедици тата агитаци ĕçĕсемпе вĕçекен самольотсенче пĕтĕмпех совет пилочĕсем ĕçленĕ.

Пирĕн çĕршыв хăвăрт çирĕпленсе, пуйанланса пычĕ. Пысăк савăтсем çуралчĕç. Пирĕн сывлăш транспăрчĕ пит те пысăк хăвăртлăхсемпе аталанчĕ. Вăл хăвăртлăх тĕнчере пĕр капиталисла государствăра та пулма пултараймаст.

1925 çултах пĕтĕм тĕнчипе паллă льотчик Михаил Михайлăвич Громăв, ытти совет льотчикĕсен ушкăнĕпе пĕрле Мускав—Пекин—Токио маршрут тăрăх чаплă вĕçев турĕ. Çакна вăл совет льотчикĕсен пĕррĕмĕш пысăк çĕнтерĕвĕ.

Çак çулах йалхуçалăх авиацийĕ çуралчĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне „Коньок-Горбунок" йатлă икĕ самольот панă пулнă. „Коньок-Горбунокпа" саранчасемпе кĕрешес тĕлĕшпе опытсем тунă. Самольотсем совет хулисемпе йалсен пурнăç йалине кĕнĕ. Самольотсемпе усă курса саранчасемпе çеç мар, сехчир йертекен вăрăм тунасемпе, вăрмана сийен кÿрекен хурт-кăпшанкăсемпе те тăтăшах кĕрешнĕ. Самольотсем вăр

ман пушарне сÿнтерчĕ. Çавăнпа пĕрлех пирĕн çĕршыв йалан ĕçлекен сывлăш çулĕсемпе витĕнчĕ.

Пирĕн сывлăш çулĕсенче совет моторĕсемпе хĕçпăшалланнă совет самольочĕсем вĕçме пуçласан, сывлăш çулĕсен хисепĕ вирлĕн ÿсрĕ. Самольотсем инçетри Сванети йалĕсене те, Памир сăрчĕ çинчи йалсене те, шăрăх Таджикистана та, Арктикăри пăрлă пушхирсене те вĕçеççĕ.

Сывлăш çулĕсем Мускава Владивостокпа, Бакупа тата Ташкентпа çыхăнтарчĕç. Вăтам Азири республиксем сывлăш çулĕсемпе витĕнчĕç. Совет льотчикĕсемпе совет машинĕсен пысăк пахалăхне буржуаллă çĕршывсем уççăнах йышăнчĕç.

1934 çулта пирĕн авиаци вăйĕнчен пĕтĕм тĕнче тĕлĕнчĕ. Пирĕн льотчиксем пăрçинчи лагертен 104 çын çăлчĕç. Историре пулман експедици мĕнле пынине пурте хытă сăнарĕç.

Челйускинецсене çăлнă хыççăн пулмăх те пулмарĕ Громăв, Спирин, тата Филин йулташсем çавра унă йĕрпе 75 сехет хушши вĕçсе 12 000 километр тăршĕ карĕç. Совет авиацийе совет çынĕсем мĕнле ĕç тума пултарнине тĕнче каллех курчĕ. Çаксем вĕсем совет авиацин вĕçсе регистрацилемен, анчах пурте йышăннă тĕнчипе паллă рекорĕсем пулнă.

Çак çулсенче самольот тăччăнах Арктикăна çĕнсе илме пуçларĕ. Аслă Сталин пуçарнипе Совет Сойузĕн чи çурçĕрти вырăнне сывлăш çулĕсен курăнман вăрĕсем чăсăлчĕç. Арктикă чăсах çын пырса кĕреймен, пурăнма тата ĕçлеме пултарайман вырăн пулса тăма пăрахрĕ. Ĕлĕк çын пулман утравсенче хуласем, вĕл кăçнали

лайăх вырăнсем пулса тăчĕç. Заполярйин таса, усă сывлăшĕнче çÿлĕ радиомачтăсем ÿсрĕç.

Вуншар суднăсем грузсем турттараççĕ. Арктикă пире нумай пурлăх парат. Халиччен вăл пурлăха етем курма пултараймаст, тесе шутланă. Инçетри çурçĕрте ăсллăх-тĕпчев ĕçĕ анлăн сарăлчĕ. Совет полярникĕсем тăрăшса ĕçленипе пула, Арктикă çинчен калакан сведĕнисем нумай пуйанланчĕç. Полйар районĕ халĕ пирĕншĕн пĕлмен вырăн мар. Арктикă тăрăх ункăллă маршрутпа—Мускав Франц Иосиф çĕрĕ—Лос Анжелос—Мускав маршрут тăрăх тунă йăвăр тата чаплăран та чаплă вĕçев никама та тĕлĕнтермен.

Халĕ ĕнтĕ полйар авиацийĕ умне питĕ те ответлă задачă сиксе тухрĕ—трансарктикăри сывлăш çулне уçса, вăл çул тăрăх çÿреме хăнăхса çитесси. Арктикăна çĕршывăн центрĕпе çыхăнтарнипех çитмест, Арктикăна вĕçме хăнăхса çитнипех çитмест. Тата Арктикă урлă вĕçме вĕренсе çитес пулат.

Çак проблемăна татса парас тĕлĕшпе пĕр полйарниксем кăна мар, çĕршывăн паллăран та паллă пур льотчикĕсемпе авиаци специалисĕсем те ĕçлеме пуçланă.

Халăх мĕнле—çавăн пекех унăн льотчикĕсем те.

Совет çынĕсем пултараççĕ ĕçлеме, пултараççĕ хăйсен пултарулăхне кăтартма. Тăван Сталин йуратăвĕпе тата тăрăшĕвĕпе хавхаланнă висĕ ним хăрама пĕлмен пилочĕсем—Чкалăв, Байдуков тата Беляков хăйсен чаплăран те чаплă самольотне аслă çулпуçĕ кăтартса панă маршрут тăрăх илсе кайрĕç. Ку вĕçев авиаци историйĕ халиччен курнă йă

вăр вĕçевсенчен чи йăвăрри пулнă. Льотчиксем çĕр çине пĕр анмасăр тăхăр пин çурă километра йахăн вĕçсе кайнă. Мускавран Удд (халĕ Чкалăв) утравĕ çине хăйуллăн сиксе çитни—вăл Мускав—Çурçĕр полюсĕ—Çурçĕр Америкă вĕçевне хăй майлă хатĕрленни пулнă.

Çак çул тăрăх: Мускав—Франц Иосиф çĕрĕ—Çĕнĕ Çĕпĕр утравĕсем—Йакути—Охотск тинĕсĕ—Камчаткăри Петропавловск, унтан кайала Удд (Чкалăв) утравне вĕçсе совет машинĕсемпе моторĕсен чăтăмлăхне тĕрĕсленĕ хыççăн, çак паттăр екипаж пĕр çулталăкран трансарктикă рейсĕ тăрăх çĕр çине пĕр анса лармасăр Совет Сойуз столицинчен Çурçĕр Америкине вĕçсе тухса, етемлĕх историйĕнче çĕнĕ тапхăр уçрĕ.

Çак событирен пĕр уйăх малтарах пирĕн сывлăш карапĕсем отрйачĕ полйар бассейнин центрне куçса çÿрекен пăр çине вĕçсе анса ларчĕ. Çурçĕр полюсĕ большевиксене пăхăнчĕ. Етемлĕх ĕмĕчĕ пурнăça кĕчĕ: полюсăн вăрттăнлăхне тупнă.

Чкалăв, Байдуков тата Беляков сывлăш çулĕ тăрăх икĕ аслă халăха—ССР Сойузĕн тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен халăхĕсене пĕрлештерчĕ вăхăтра „Çурçĕр полюсĕнче" хĕл каçакан тĕлĕнмеле паттăрсем çанталăк мĕнле пулмалли çинчен пĕлтерсе тăнă.

Папанинцĕсен патĕнче пулас Громăв, Йумашĕв тата Данилин çĕр çине пĕр анса лармасăр Мускавран Мексикă чиккине вĕçнĕ чухне те полюс таврашнели çанталăк улшăнăвĕсем çинчен лайăх пĕлсе тăнă. Çак йулашки вĕçÿре пирĕн льотчиксем инçете вĕçессинче тĕнчипе паллă рекорда тунă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизаци ÿсĕмĕ çинчен

ЙĔПРЕÇ. Партине çĕнĕ членсем илесси парти организацийĕсен тĕп ĕçĕ пулса тăрать. Малта пыракан, пĕтĕм хăватпа парти ĕçĕшĕн тăракан çынсене, рабочисене, колхозниксене тата интеллигентсене парти ретне илессишĕн кулленех ĕçлемеле.

Йĕпреç районĕнчи парторганизаци çĕнĕ членсем илме пуçланăранпа чылай ÿсрĕ. Йулашки вăхăтра чылай пуçламĕш парторганизацисем çĕнĕ членсем илес ĕçе аванлатрĕç. Анчах районĕпе илсен, питех те начар. Районра пĕтĕмпе пуçламĕш парторганизаци 15, парти кандидачĕсен группи 3 шутланать. Вĕсенчен çак иртнĕ 7 уйăх хушшинче 6 пуçламĕш парторганизацинче çеç парти ретне çĕнĕ членсем илнĕ. Çак 7 уйăх хушшинче районĕпе мĕн пурĕ те парти кандидатне 11, членне 3 çын çеç илнĕ.

Партине çĕнĕ членсем илессипе Буинскăри сланцă кăларакан шахтăри, райĕçтăвкомри, райçутĕç пайĕнчи т. ыт. пуçламĕш парторганизацисем аванрах ĕçлесе пыраççĕ. Анчах, çав вăхăтрах, чылай пуçламĕш парторганизацисем („Кооплеспром" алăсталăх ертелĕнчи, Буинскăри хăма çуракан савăтри, Епеç йалсоветĕнчи, МТС-ри т. ыт.) питĕ йапăх ĕçлеççĕ. Ку пуçламĕш парторганизацисенче çак иртнĕ 7 уйăх хушшинче пĕр çынна та парти ретне илмен.

Парторганизаци начар ÿснин сăлтавĕсенчен пĕри вăл—массăлла-политикăллă ĕçе кирлĕ таран организацилеменни, пуçламĕш парторганизацисем партире тăман активран уйăрăлса кайни.

„Кооплеспром" алăсталăх ертелĕнче тата МТС-ра ĕçре тĕрĕсленнĕ, пĕтĕм халăхшăн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн йуратса ĕçлекен рабочисем—стахановецсем вуншарăн шутланаççĕ. Вĕсен партине кĕрес хавасλăх пысăк. Обшчĕствăллă ĕçсенче активлă хутшăнса ĕçлеççĕ, МТС-ра комбайнерсем 11, трактăриссем 92, бригадирсем 13 çын, пĕтĕмпе 200 çын ытла. Вĕсен хушшинче массăлла-политикăллă ĕçе кирлĕ таран организацилемен. Çапла вара ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсем нумай пулин те, ку пуçламĕш парторганизацинче кăçалхи çул пĕр çынна та парти ретне илмен.

Партине кĕме тивĕçлĕ çынсене рекомендацисем тупма пулăшмала. Анчах районри хăшпĕр пуçламĕш организацисенче çак ĕçе тумаççĕ. Партине кĕме хатĕрленекен йулташсене документсем, рекомендацисем хатĕрлеме пулăшмаççĕ те, вĕсен ыйтăвĕсене пăхса тухассине вăрăма тăсаççĕ. Акă Буинск разйезĕнче ĕçлекен Волкăв, Кармала лесничĕствинче ĕçлекен Афанасйĕв комсомолĕцсем партине кĕме апрел уйăхĕнченех документсем, рекомендацисем хатĕрлеме тытăннă, анчах вĕсене пулăшманнипе, вĕсем пайанхи куна та хатĕрлесе çитермен.

Йĕпреç районĕнчи парторганизацин çĕнĕ членсем илес ĕçе вăйлатмала. Ку ĕçре ПС(б)П райкомĕн инструктăрĕсем пуçламĕш парторганизацисене кулленех пулăшса пымала.

Партине çĕнĕ членсем илес пирки 1938 ç. ийулĕн 31-мĕшĕнче пичетленсе тухнă „Правда" хаçатăн умстатйинче аван кăтартса панă. Халĕ Йĕпреç районĕнчи чылай пуçламĕш парторганизацисенче çав умстатйана сÿтсе йавнă, анчах пур пуçламĕш организацинче те мар-ха.

Ф. Захарăв.

Партин II-мĕш сйесĕ çинчен вĕренеççĕ

Елĕк районĕнчи пуçламĕш парторганизацисенче Партин II-мĕш сйесĕ пулнăранпа 35 çул тултарни çинчен коммуниссемпе комсомолĕцсен пĕрлешÿлĕ пухăвĕсенче сÿтсе-йаваççĕ. Йулашки вăхăтра партин II-мĕш сйесĕ çинчен парти кружокĕсенче вĕренме тытăнчĕç.

Августăн 9-мĕшĕнче Елĕкри типографипе почтă çуммĕнчи коммуниссемпе комсомолĕцсен пĕрлешÿлĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Партин II-мĕш сйесĕ çинчен Золăтăв йул. докладне итленĕ хыççăн, пуху II-мĕш сйес çинчен кружоксенче вĕренме йышăнчĕ.

Пуху çавăн пекех Партин Тĕпкомĕ „Парти ретне çĕнĕрен членсем илес ĕç мĕнле пыни çинчен" 1938 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленине сÿтсе-йаврĕ. Пухура тухса каланă йулташсем парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕç. Парти ретне ÿстерессине парторг хăй чарса тăни курăнчĕ. Петрикăв йулташ, парти кандидачĕ, парти членне куçма зайавлени пани икĕ уйăх çитнĕ ĕнтĕ. Ку зайавленийе ним сăлтавсăрах пайан кунчен пăхса тухмасăр тытса тăнă. Парторганизаци комсомола йертсе пырас тĕлĕшпе те çителĕксĕр ĕçленĕ. Пуху çак çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме хушса хăварчĕ.

В. Йефремăв.

Испани çинчен доклад

Шупашкарти çĕнĕ стройкăри рабочисем пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе пысăкăн интересленеççĕ. Вĕсем асла Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене йепле отпор пани çинчен, Испанири фронтсенче ĕçсем мĕнле пыни çинчен т. ыт. те тĕплĕн пĕлесшĕн. Рабочисем ыйтнипе çак кунсенче Хусантан килнĕ лектăр Испани çинчен пысăк доклад туса пачĕ. Доклада рабочисем пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

В. Дмитрийĕв.

Б. Пророкăв пĕтĕм тĕнчери çамрăксен XXIV кунĕ тĕлне хатĕрленĕ плакатран ÿкерсе илнĕ.

Призыв умĕнхи канашлу

Августăн 13-мĕшĕнче Чăваш АССР Çар Комиссариатĕнче Çар Комиссарĕсемпе райĕçтăвкомсенчи Çар пай пуçлăхĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура районсенче призыва мĕнле хатĕрленсе пыни çинчен отчотлă докладсем итлерĕç.

Призыва хатĕрленни çинчен Трофимăв (Пăрачкав р.), Чибатдинăв (Шăнкăртам р.), Кротăв (Трак р.), Петров (Шăхасан р.) тата Чернов (Вăрмар р.) йулташсем тухса каларĕç. Вĕсем çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене нумай палăртрĕç.

Пăрачкав районĕнче уйрăмăнах хут пĕлменлĕхе пĕтерес, трахомпа чирлисене сыватас йенĕпе çителĕклĕ ĕçлемен. Районра хут пĕлмен допризывниксем 8 çын, сахал пĕлекенсем 35 çын шутланаççĕ, районĕпе 6 çынна çăмăл операцие сыватмала пулнă. Çаксене райĕçтăвком тĕплĕн пĕлсе тăнă, анчах нимĕн те туман.

Шăнкăртам районĕнче те сывă мар допризывниксемпе йапăх ĕçлеççĕ. Допризывниксене шута илнĕ чухне районра 63 çын сывă мар пулнине палăртнă пулсан, халĕ 17 çынна çеç сыватнă. 11 çынĕ халĕ сывалма çÿреççĕ. Ыттисене сывалма пуљницана çÿретес пирки никам та нимĕн те тумаççĕ.

Канашлура Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче хут пĕлменлĕхе пĕтерес йенĕпе ĕçлекен Иванов йулташ та пулчĕ. Вăл „хăш районра допризывниксене хута вĕрентес ĕçе лайăх пурнăçласа пыраççĕ," тесе ыйтсан, нимĕнле ответ та параймарĕ. Ку ĕнтĕ ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ хут пĕлмен допризывниксемпе ĕçлеменнине питех те уççăн кăтартса парать.

Канашлу призыва хатĕрленес тĕлĕшпе вырăнсенче партипе комсомол организацисем те йапăх ĕçлени çинчен палăртса хăварчĕ.

— В рнар, Çĕмĕрле районĕсенче те,—терĕ Канаш Çар Комиссариатĕнчи 2-мĕш рангри техник-интендант Смагин йулташ,—хут вĕренмен тата сахал вĕреннĕ допризывниксем чылай, çапах та ку районсенчи çар пайĕсем, партипе комсомол райкомĕсем çителĕклĕн ĕçе тытăнман.

Смагин йулташ хыççăн Улатăр Çар Комиссариатĕнчи 1-мĕш рангри техник-интендант Печалин йулташ тухса каларĕ. Вăл та Улатăр, Пăрачкав, Кувакинă районĕсенчи комсомол райкомĕсем допризывниксене хут вĕрентес ĕçе тивĕçлипе туса пыманнине палăртса пачĕ.

Вăрмар райĕçтăвкомĕн çар пайĕ 12 çынна трахомран сывалма Канаша йанă. Анчах допризывниксем мĕнле сывалса пынине тĕрĕслемеççĕ. Допризывниксем килĕсене кайса сывалас вăхăта иртереççĕ.

Канашлу пĕтес умĕн Москейĕв (ЧАССР Сывлăх сыхлав Халăх Комиссариатĕнчен), Арзамасцĕв (Комсомол Обкомĕн çекретарĕ) йулташсем призыва хатĕрленес ĕçри пур çитменлĕхсене те кĕске срукра пĕтерме кирли çинчен тухса каларĕç. Йĕпреç Çар Комиссарĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ капитан Бурков йулташ райĕçтăвкомсенчи çар пайĕсен ĕçĕсене вайлăн критиклерĕ. Малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен каларĕ.

Канашлу допризывниксен хушшинче кинĕ йăлана пĕтерме кирли çинчен хыттăн кăтартса хăварчĕ. Иртнĕ çулта Хĕрлĕ Чутай районĕнчи çамрăксем хăйсене Хĕрлĕ Çара илсен колхоз лашисене вим уйăса тăмасăр чуптарса çÿресе ывăнтарна, киревсĕр çăмахсемпе йурласа иртехнĕ.

Октйабĕр революци пулни 21 çул çитет. Халĕ кинĕ, çĕрĕк йурасен вăхăчĕ иртрĕ. Кинĕ йăласене пĕтерме вăхăт, терĕ канашлу. Призыва хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсене пĕтерес майпа социалисăмлă ăмăртăва нихăçанхинчен ытла вăйлатма йышăнчĕç.

В. Цыпљонкăв.

Пуса хуйса кăларнă

Елĕк районĕнчи „Труд" колхоз паха сĕс кантăршăн çулсеренех тăрăшса ĕçлет, пысăк тупăш илет. Кăçал колхозра сĕс-кантăр тăвассипе йатарласа уйăрнă звено ĕçлет. Çав звено 4 пин çурăм пуса татрĕ, хаљ çав пусана шыва хуйса кăларчĕç. Çак кунсенче государствăна паха сĕс пама тытăнаççĕ.

Çавнашкалах Буденный йачĕпе тăракан колхоз та 5 пин çурăм пуса шывран кăларчĕ. Сĕс пахалăхĕ аван.

А. Орлов.

Кĕпер çинчен сакăр çул калаçаççĕ

Турай йалсоветне кĕрекен колхозсенче (Тутаркас р.) кашниннех сулйĕр бригадисем пур. Молăтăв тата Кирăв йачĕпе тăракан колхозсенчи бригадăсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ çулйĕре аван пăхса усраççĕ. Çăмăр çунă хыççăн йакатса тăраççĕ.

Çавнашкалах „Пучах" колхозăн та бригадă пур. Калас пулать: бригадă пур та, ĕçĕ çук. Йункун Турай йалĕнче пасар пулать. Пасара кайас пулсан, пĕр кĕпер урлă каçма тивет. Вăл кĕпере такçанах йусамала. Кĕперĕн хăмисем çĕрсе пĕтнĕ, пайан ыран йатăнса анас пек тăраççĕ. Çапах йусакан çук. Ана йусас пирки „Пучах" колхозĕнче сакăр çул хушши ĕнтĕ, кашни пухурах калаçаççĕ. Кам мĕн каламан пулĕ, анчах никам та нимĕн те туман.

К. Донской.

Икĕ уйăхра 120 ĕçкунĕ тунă

Турхан районĕнчи „Липовка" колхоз членĕ Марийа Воробйова йулташ иртнĕ 4 çул хушшинче струшкăсем тăвакан савăтра ĕçленĕ. Вăл станочница пулса ĕçлесе йалан пысăк тухăçлăх кăтартса пынă. Нормăна 180 процентран кайа тултарман. Лайăх ĕçленĕшĕн темиçе хутчен те премисем илнĕ. Производствăра ĕçленĕ вăхăтра Воробйова йулташ политика тĕлĕшĕпе те нумай ÿсрĕ. 1935 çулта комсомола кĕнĕ.

Халĕ Воробйова йулташ колхозра ĕçлет. Кунта та вăл йалан стахановла ĕçлет. Уйăхри ĕçĕсене тунă çĕрте ĕçлесе, нормăна куллен 200 процент ытла тултарса пырать. Çапла ĕçленипе икĕ уйăх хушшинче 120 ĕçкунĕ тунă. Çав вăхăтрах колхозниксем хушшинче агитаци ĕçне туса пырать. Колхозниксене хаçат журналсем вуласа парать, обшчĕствăллă ĕçсенче активлăн хутшăнса ĕçлет.

Колхоз Воробйова йулташа кăтартуллă ĕçленĕшĕн преми пама палăртса хунă.

И. Архипăв.

Стахановла йухăм пуçланнин виççĕ çул тултарас умĕн

Икшер нормă тултаракан бригадăсем

Шупашкарти çĕнĕ стройкăра социалисăмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Ăмăртса ĕçленипе уйрăм рабочисем çеç мар, пĕтĕм бригадăсем стахановла тухăçлăхпа ĕçлеме тытăнчĕç.

Халĕ кунта бригадă икĕ нормă тултарать тени никамшăн та çĕнĕ хыпар мар. Икшер нормă тултарасси чылай бригадăсен кулленхи йăлисене кĕнĕ. Григорйĕв йулташ йертсе пыракан бригадă ийуљ уйăхĕнчи плана 258 процент тултарнă. Стахановла ĕçленипе ĕç укçи хисепĕ те чылай ÿснĕ. Бригадă членĕсем кунсерен 15 тенкĕшер ытла илеççĕ.

Зайцĕв йулташ бригади те пысăк тĕслĕхсем парать. Унăн бригади нормăна 210 процент тултарать. Кунашкал ĕçлекен бригадăсем тата та пур. Вĕсен шучĕ пĕрмай ÿсет.

В. Д.

Стахановецсен опытне сараççĕ

Çĕмĕрле. „Бољшевик" савăт иртнĕ 7 уйăх планне 102,7 процент тултарнă. Халĕ савăтри рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем стахановла йухăм пуçланни виççĕ çул тултарнине стахановла йухăма чăн-чăн массăллă йухăм туса хунипе кĕтсе илессишĕн хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ.

Бригадăсенче производствăллă канашлусем пулса иртеççĕ. Канашлусенче социалисăмлă ăмăрту логăвăрĕсене тĕрĕслеççĕ, стахановецсен паха опычĕсем çинчен сÿтсе-йаваççĕ. Кунашкал туни рабочисене стахановецсен опычĕсемпе тĕплĕн паллаштарма май парать.

Иваницкий.

Платниксен бригадин ÿсĕмĕ

Угловский йулташ йертсе пыракан платниксен бригади Шупашкарти стройкăсенче чылайранпа ĕçлет. Халĕ унăн бригади 880 вырăнлă шкул строителствинче. Бригадăн чÿрече рамĕсене лартас, мачча тата урай хăмисене сарас ĕçсене тумала. Çак ĕçсене тунă çĕрте бригадă членĕсем куллен ÿсĕмсем туса пыраççĕ. Бригадă хăйĕн нормине 300 процент тултарса пыма пуçларĕ.

Çак ÿсĕме бригадă ĕçне лайăх йĕркеленипе, техникăна алла илнипе тунă. Угловский йулташ строителствă ĕçĕнче 25 çул ĕçлет. Вăл хăйĕн опычĕпе бригади членĕсене йалан вĕрентсе пырать. Ф. Çеменăв йулташ ĕçре вĕренсех платник-маçтăр пулчĕ.

Т. Иванов.

Ырăш парса татрĕç

Тутаркас. Тойкиљт йалсоветне кĕрекен колхозсем августăн 8-мĕшĕнче çуртрисене те вырса пĕтерчĕç. Çавăн пекех государствăна ырăш парса татрĕç.

Сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессине вăрăма тăсаççĕ

Епĕ Канашри вакунсем йусакан савăтри касkалакан цехра 1937 çултанпа ĕçлетĕп. Çулталăк хушшинче техникăна вĕренес тата хамăн политикăллă пĕлĕве ÿстерес йенĕпе нумай малала кайрăм. Манăн пурнăç та лайăхланчĕ. Епĕ çеç мар, цехра ĕçлекенсем пурте хăвăртăн ÿсse пыраççĕ. Нумай çынсем станоксем çинче ĕçлеме вĕренчĕç, квалификацилĕ рабочисем пулчĕç, нумайĕшĕсем маçтăра çитиччен ÿсрĕç. Стахановла тухăçлăхпа ĕçлекенсен хисепĕ куллен ÿсsе пырать. Кашнийех стахановец пулассшăн тăрăшать.

Рабочисен коллективĕ лайăх ĕçлессишĕн тăрăшать пулин те цех кайа йулса пырать-ха. Епĕ ĕçлеме тытăннăранпа, çулталăк хушшинче, цех хăйĕн планне ăнăçлăн тултарнă уйăхсем сахал пулнă. Мĕншĕн апла, камсем айăплă цех начар ĕçленишĕн? Цех начар ĕçлени савăт, цех руководителĕсем тата партипе профсойуз организацисем сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерессишĕн кĕрешессине тивĕçлĕн йертсе пыманнинчен, ĕçе йĕркелĕс тĕлĕшпе начар ĕçленинчен килет. Фактсем те çавăн çине кăтартса параççĕ.

Акă, цех ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнакан ыйтăва—браксене пĕтерес ĕç мĕнле тăнине илер. Иртнĕ çулта чылай вăхăт хушши цехăн брак нумай пулнă. Сменă маçтăрĕсем пулнă Давыдйăпа Ковшик брак пулнишĕн рабочисене айăпласа ĕç укçинчен тытса йулмалла тесе кăшкăратчĕç. Рабочисем жалăбă парсан—ытăвăрсем илнĕ. Цех начаљникĕ пулнă Стразăв Давыдйăва Ковшика рабочисене хăратма майсем панă. Çапла вара чылай вăхăт хушши цех брак тăвас йăла тытăнсанчче пулнă.

Халĕ тăшманĕсене уçса паларткă, вĕсен йăвине çăмăрса такнă. Кун хыççăн цех руководителĕсен рабочисене тăшмансен сийенлĕ ĕçĕн йулашкийĕсене пĕтерессишĕн кĕрешме организацилемеле пулнă. Тÿррĕмĕн каласан, браксене пĕтермешкĕн рабочисен техникă пĕлĕвне ÿстерни, пĕсене производствă йĕркине лайăх вĕрентни, дисциплинăна çирĕплетсен пыни, стахановла йухăма вăйлатни кирлĕ пулнă. Чăнах та, техникă вĕренĕвне çĕклес, производствă ĕçне йĕркелес йенĕпе чылай ĕçсем тунă. Йертсе пырас ĕçе ĕçре ÿснĕ çынсем пычĕç. Епĕ те аслă маçтăр пулса ĕçлетĕп. Халĕ брак пулмашĕн рабочисем айăплă маррине кулленхи ĕçре куратăп.

Станочницăсем Цапина, Рыжакова тата ытти йулташсем иртнĕ вăхăтсенче брак тăвакансем пулнă. Мĕнле ĕçлемеллине лайăххăн кăтартса парса вĕрентнĕ хыççăн вĕсем брак тума пăрахрĕç çеç мар, стахановла ĕçлеме тытăнчĕç. Цапина йулташ нормăна 200 процент таран тултарса пырать, Хасмутдинăва йулташ та кайа йулмасть. Анчах рабочисене лайăх ĕçлеме вĕрентес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Социалисăмлă ăмăртуна стахановла йухăма çĕклес, лайăх опытсене сарас, кулљтурăллă-массăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе савăт, цех руководителĕсем тата партипе профсойуз организацисем сÿрĕк ĕçлеççĕ. Çавна пула сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси вăрăма тăсăлса пырать. Ку ĕнтĕ цеха ăнăçлăн ĕçлеме чăрмав кÿрет. Çакна илмесĕр та тумасть.

Рабочисен ĕç хастарлăхĕ, активлăхĕ пысăк. Савăт руководителĕсен, партипе профсойуз организацисен хисеплĕ задачи вăл—активлăн, хастарлăн сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтерес, савăта лайăх ĕçлеттерессишĕн кĕрешнĕ çĕре организацилемелле.

И. Григорйĕв.

Авиацин Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ (ФАИ) конференцийĕнче вĕсене 1937 çулта авиаци йенĕпе чи лайăх çитĕнÿсем тунăшăн ФАИ килнĕ президенчĕн де Ља Во йачĕпе хисепленекен медаљсем панă.

Сывлăшри талкăшсене çĕнсе илес историнче совет авиацийĕ нумай чаплă çĕнтерÿсем туса кăтартрĕ.

Çулсем иртĕç, пирĕн кунçулĕсенчи çитĕнÿсене авиаци аталанăвĕ тăçтах кайа тăратса хăварĕ, анчах çапах та нулас ăру совет љотчикĕсем челюскинецсен лагĕрне чаплăн вĕçнине, Арктикă çĕрине сывлăш ескадрийĕ вĕçсе аннине, ССР Союзĕн Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене пирвайхи хут вĕçнисем çинчен йалан асăнса илĕç.

Йутçĕршыв пилочĕсем йертсе пыракан йутçĕршыв „йункĕрсĕсем" патĕнчен пуçласа паттăр совет ескипажĕ йертсе пыракан совет самољочĕсем патне çитме—вăрăм çул. Вăйлă авиаци промышлĕнниçĕ туса, хамăр конструкци тăрăх самољотсемпе моторсем туса, сунатлă машинасемпе лайăх вĕçме пĕлекен сталинла љотчиксен ăрăвне ÿстерсе, пирĕн çĕршыв çак çула историре пулман кĕске срукра утса тухрĕ. Пĕтĕм тĕнчипе паллă тунă рекордсенчен çуррине йахăн халех пирĕ—чи çамрăк авиаци державине тивет.

Пер 1936—37 çул хушшинче кăна совет љотчикĕсем ФАИ таблици çине пĕтĕм тĕнчипе паллă рекордсем çĕнĕрен 18 çырса хучĕç.

Сывлăша штурмăлама хĕрарăмсем те тытăнчĕç. Совет љотчици Полина Осипенко хĕрарăмсен виçĕ рекорчĕсене илнĕ. Вишневскайа тата Медникăва љотчицăсем хăвăрт вĕçмели самољотсемпе вĕçсе рекордсем тунă.

Бољшевиксен партийĕ пăхса ÿстерне љотчиксем, хăйсен тĕлĕйне, раскалне тăвакансем, мĕн тума пултарнине 1938 çулта каллех пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕç.

Хамăр тăван çĕршыва вĕренес, пĕлес тата сыхлас ĕмĕтсемпе хавхаланнă љотчик Коккинаки тата штурмăн Брйандинский пĕр талăк хушшинче Мускавран Владивосток сывлăхнели вырăна вĕçсе çитнĕ.

Вĕсем аслă совет çĕршывĕ тăрăх, унăн вăрманĕсем, сăрчĕсем, пушхирĕсем урлă, тĕтресем тата вăйлă çил-тăвăлсем витĕр совет авиацин йалавĕне—Сталин йачĕпе вĕçнĕ. Йăвăр сăмантра та, вăйлă çил-тăвăл вăхăтĕнче те, пилотпа штурмăн пĕр хумханмасăр хăйсен ĕçне туса пынă. Вĕсем тăван индустрине, чаплă самољота, вăйлă, уççăн ĕçлекен мотора лайăх шанса тăнă. Коккинакипе Брйандинский йулташсен çĕнтерĕвĕ—вăл пирĕн авиацин, пирĕн стахановецсен, пĕтĕм çĕршывăн çĕнтерĕвĕ.

Пирĕн хĕрарăм-љотчицăсем геройсенчен йулмаççĕ. Вĕсем те сывлăш машинин штурвалĕсене çавăн пекех çирĕп тытма пĕлеççĕ. Коккинакипе Брйандинский Инçет-ри Хĕвелтухăçĕнче кайнă вăхăтра виçĕ љотчицă—Полина Осипенко, Вера Ломако тата Марина Раскова гидросамољот çине ларса, Хура тинĕс хĕрринчен Шурă тинĕс хĕрнелле вĕçтерчĕç.

Гидросамољот хулисем, йалсем, уйсем, вăрмансем урлă вĕçнĕ. Гидросамољотăн вĕçсе, асăрах çĕр çине анса лармалла пулнă пулсан, йе ваннă, йе катастрофа пулма пултарнă. Анчах пилотсем пĕр хумханмасăр, тÿлекĕн ĕçлесе машинăна палăртнă çĕре илсе пынă. Машинă, мотор, айеронавигаци приборĕсем çине вĕсем шаннă. Вĕсем çавăн пекех хăйсене хушнă ĕçе тума пултарассине те лайăх шанса тăнă.

Осипенко, Ломако тата Раскова йулташсем çĕршыв шаннипе, љотчиксен чи лайăх тусне—Сталин йулташа йуратнипе хавхаланса савăнса мухтавлăн вĕçнĕ. Вĕсем хăйсен йĕвене чаплăн вĕçлесе çĕнтерÿ турĕç.

Осипенко, Ломако тата Раскова йулташсен çĕнтерĕвĕ те—пĕтĕм çĕршывăн, пирĕн авиаконструктăрсен, авиастроителсен, стахановецсен çĕнтерĕвĕ.

С. Р Сойузĕ—хăватлă авиацилĕ державă. Пирĕн çунатлă машинасем мирлĕ ĕçсенче ĕçлеççĕ. Самољотсем чирлĕ çынсене тухтăрсем патне, тухтăрсене чирлĕ çынсем патне илсе çÿреççĕ. Љотчиксем почтă, ĕмелсем, апат-çимĕçсем, кĕнекесем, журналсем, хаçатсем илсе кайса параççĕ. Парлă вырăнсенчи сывлăш разведки судносене командирĕсене хăрушсăртарах, лайăхрах çулйĕрсем тупма пулăшать, пулă тытакан судносене пулă пур, тинĕсри тискер кайăксем пур вырăнсене тупса парать. Пирĕн авиаци мĕнле-мĕнле ĕçсем тунине каласа тухма питех те йăвăр.

Пирĕн совет љотчикĕсемшĕн вĕçсе тухма пултараймин, çĕнсе илме пултараймин маршрутсем çук. Вĕсем тинĕсре путакан пулăçсене çăлаççĕ, çĕтсе кайнă сунарçăсене шыраса тупаççĕ. Вĕсене тĕтре тата аслати хăрушă мар.

Пирĕн сталинла ăмăрткайăксем пĕр курмаççĕ, пирĕн наукăпа чĕнтев институчĕсенче туса кăларнă чаплă приборсемпе усă курнипех вĕçме пултараççĕ.

Пирĕн авиаци çăнсăлăвĕ çĕршывăн культурине тата вăй-хăватне, социалисăмлă строителствă ĕçне лăпкă туса пыма тăрăшнине тĕкĕр çинчи пек кăтартать.

Социализм çĕршывĕн авиацийĕ чаплă сывлăш карапĕсемпе, моторсемпе, писĕхнĕ çынсемпе—тăван çĕршыва чĕререн парăннă, çирĕп, талантлă пилотсен çарĕпе пуйан. Çак пилотсем хăйсен кулленхи ĕçĕсенче чаплă çĕнтерÿсем тăваççĕ, Арктикăри пăрлă пушхир талкăшне çĕнсе илеççĕ, тĕнчере пĕр љотчик та вĕçсе çитеймен çÿллĕхе вĕçсе улăхаççĕ.

Пирĕн сывлăшри машинисем улшăнсах, çĕнелсех пыраççĕ. Вĕсен командирĕсем те аталансах, ÿссех пыраççĕ. Халиччен çĕнсе илнĕ рекордсем пирĕн љотчиксене лăплантарма пултараймаççĕ. Вĕсем авиацин çĕнĕ, тĕлĕнмелле чаплă çĕнтерÿвĕсем çинчен ĕмĕтленеççĕ. Пирĕн љотчиксем ĕмĕтленеççĕ пулсан, вĕсен ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕреççĕ-кĕреççех, мĕншĕн тесен вĕсем совет çĕршывĕнче пурнăçаççĕ. Халăхсен аслă сунпусĕ Сталин вĕсен çитĕнĕвĕсене тимлĕн сăнаса пырать, вĕсене тăтăшах пулăшать.

Пайан пирĕн пилотсем çĕршыв йачĕпе, Сталин йачĕпе рекордсем тăваççĕ, сывлăш çулĕсене çĕнсе илеççĕ, ыран вăрçă тапрансан, вĕсем граждăнла самољотсенчен çар машинисем çине куçса ларса, хăйсен вăйне вуншар хут ÿстерсе, тăшмана хăйĕн çĕре çинчех аркатма кайĕç, хăйсен телейне—170 мĕлйунла совет халăхĕн телейне сыхлама кайĕç.

Пирĕн авиаци вăй-хăлĕ, пирĕн пултарулă, хăйуллă љотчиксен патриотисăмĕ—çĕнтерÿ хăвачĕ.

Тăшмана вĕсем пĕтерĕççех!

Хĕллене хатĕрленесси начар пырать

Çĕмĕрле хулинчи предприятисем пурте вăрман пуянлăхĕ çинче ĕçлеççĕ. Комбината, „Большевик", „Труженик" тата ытти савăтсене кирлĕ чĕрĕ таварсем вĕсем — йывăç. Ку предприятисене йывăç тăратас ĕçре механизациленĕ вăрманпункчĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Механизациленĕ вăрманпункчĕн пĕр июль уйăхĕнче кăна комбината 4505 кубла метр йывăç памала пулнă. Кун çумнĕ ытти предприятисене памали йывăç хисепне хушсан, предприятисем авăçлăн ĕçлесси пуринчен ытла вăрманпунктĕнчен килни те уççăнах курăнать.

Анчах вăрманпункчĕ хăйĕн тивĕçне кирлĕ пек тытса пымасть-ха. Июль уйăхĕнче комбината йывăç тăратас плана 17 процент, „Большевик" савăта тăратас плана 35 процент çеç тултарнă. Кунашкал пулни предприятисенчи вăйлă техникăлă машинăсемпе начар усă курасси патне илсе пырать.

Вăрманпункчĕ мĕншĕн начар ĕçлет? Ку ыйтăва хирĕç йалан „ĕç вайĕ çителĕксĕр" тенĕ сăмахсемпе ответлеççĕ. Ку тĕрĕс тейĕнĕр. Анчах вăл алла усса ларма ирĕк памасть. Ĕç вайĕ çитмест пулсан ăна пухас пулать, ĕç вайĕ çитменнине механизмсемпе туллин усă курнипе витмелле. Вăрманпункчĕн руководителĕсем хушшинче çавнашкал тимлĕх çук-ха. Механизмсемпе ытларах усă курассишĕн тăрăшмалла мар, вĕсене йĕркелĕ ĕçлеме те майсем туман.

Кăмашăри трактăр çулĕ июль уйăх планне 12 процент, Сăр трактăр çулĕ 26 процент кăна тултарнă. Трактăрсем пама пултарнинчен 20 процентчĕпе çеç усă кураççĕ. Кăмаша трактăр çулĕ тăрах пĕр трактăрăн 28 кубла метр турттарса тухмалла, 19 кубла метр кăна илсе тухаççĕ. Мыслен вăрман участкинчи обозра 16 лаша пур, 12-шĕ çеç ĕçлеççĕ. Анчах куншăн никам та ответ тытмасть.

Вăрманта лайăх ĕçлекенсем сахал мар. Кабанăвă участкинчи обозра ĕçлекен ПСК(б) Парти кандидачĕ Прокопйĕв йулташ ĕçре аван тĕслĕхсем кăтартать. Унăн бригади июль уйăх планне 160 процент тултарнă Прокопйĕв йулташ бригади вăл ÿсеме ĕçе лайăх организациленипе тунă. Бригада ĕçе ирхине 3 сехетре тухать, кăнтăрла шăрăх вăхăтра лашасене кантарма кĕртет. Кайран каллех ĕçе тухать. Вăрманпункт руководителĕсем Прокопйĕв ĕç меслечĕсене ытти участкăсене сарман-ха.

Халĕхи вăхăтра вăрманпункчĕн умĕнче тăракан ответлă задача вăл — хĕллене хатĕрленесси. Ку йенепе те тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман. Çуртсем тума, бараксем йусама васкамаççĕ. Кăмаша çулĕ çинче стахановецсене валли 8 хватерлĕ çурт тума 10 пин тенкĕ панă, Мыслецра 8 хватерлĕ çурт тумалла, вĕсене пайанчен те тума пуçанман. Çавнашкалах çуртсемпе бараксене йусама панă 83 пин тенкĕ укçапа та усă курмаççĕ.

А. Львов.

Çутĕç пайĕ шкулсене йертсе пырассине маннă

Куславкка районĕнчи çутĕç пайĕ строительствă йенĕпе питĕ сÿрĕккĕн ĕçлет. Йершерти çĕвĕрен тăвакан шкул çуртне кăçалхи вĕренÿ çулĕ çитнĕ тĕле туса пĕтермелеччĕ. Шкул тума кирлĕ укçа-тенкĕне, строительствă материалĕсене çителĕклĕ уйарса панă.

Районти çутĕç пайĕ строительствă çине çаврăнса пăхманнипе тата шкул директăрĕ Михайлăв уйарнă укçа-тенкĕпе тата строительствă материалĕсемпе вăхатра усă курма пултарайман пирки, çĕнĕ шкула тавас ĕç вăрăма чăсăлать. Шкул çуртне пайанхи куна 40 процент та туман-ха.

Паймитри пуçламĕш шкул çурчĕ иртнĕ хĕлле вуткăвар тухса сиен курчĕ. Шкула йусаса çитерме пайанах укçа кирлĕ. Анчах йалсовечĕ шкул валли уйарнă укçана шкулшăн пĕр пус та расхутламан.

Аттестаци комиççийĕ ĕçре çитменлĕхсем пулнă пирки хăш-пĕр шкул пуçлăхĕсене ĕçрен хăтармала туса хăварчĕ. Комиççи решенийĕсене Çутĕç Халăх Комиссариатĕнче çирĕплетиччĕнех районри çутĕç пайĕ шкул пуçлăхĕсене: „Сире июнĕн 1-мĕшĕнчен ĕçрен хăтаратпăр" текен удостоверенисем валеççе пачĕ. Халь çав шкулсем нумайĕшĕ пуçлăхсăрах.

Çутĕç пайĕн пуçлăхĕ Терентйĕв шкулсене тивĕçлипе йертсе пымасть. Шкулсенчи çитменлĕхсене вăхатра пĕтерессишĕн тăрăшмасть. Ăна çутĕç пайĕнче те сайра хутра çеç тĕл пулма пулать.

А. Зайцĕв.

Студентсене кĕтсе илме начар хатĕрленнĕ

Чăваш йалхуçалăх институтĕ çĕрçĕ кадрĕсене хамăр республика валли çеç мар, ытти республикăсемпе крайсем валли те хатĕрлет. Партипе правительства института пысăк пулăшу параççĕ. Лабораторисенче пуйан оборудовани пур. Преподавательсен составĕ çителĕклĕ.

Аслă шкулсенче вĕренме кĕмелли испытанисем пуçлаччĕç. Йалхуçалăх институтне те испытани пама студентсем нумай килсе тулнă. Общежитисене йусас тĕлĕшпе администраци çуллахи вăхăтра имĕн те туман пирки, халь ĕнтĕ, испытанисем пуçлансан тин, общежитисене тĕпрен йусама, дезинфекцилеме тытăнчĕ. Выртса-тăмали хатĕрсене кăçал пĕрре те дезинфекцилемен. Студентсене тасал мар тÿшексемпе утийалсем панă.

Серйожин.

Чăваш орфографин тĕп правилисене сÿтсе-йавнă май

Вырăс алфавичĕ çине куçни авантарах

Чăваш орфографин тĕп правилисем пирки каларнă проектпа килĕшме çук. Ăна аталанса пыракан чĕлхене çирĕплетме мар, пăтраштарса йама çеç тунă. Проектăн 7-мĕш пайĕнче Ленинград областĕ, химия промышленносте, тенĕ. Кусем сăмах çаврăнăшне, йанăравлăхне пĕтерсе хураççĕ.

Ман шутпа вырăсла алфавит çине куçни аван пулмалла. Чăваш чĕлхинчи Ť, Ļ, Ņ, Ç саспаллисемпе, пĕрлех Ӳ, Ă, Ĕ саспаллисене каларни çырма та, вулама та чăрмантармасть, вĕсем вырăнне ь, ъ саспаллисемпе усă курма пулать. Кун пирки „Чăваш Коммунĕ" хаçатра (167-мĕш №) В Йакăвлĕв йулташ çырнăччĕ Анчах вăл çырнă хăшпĕр вырăнсемпе килĕшме çук. Сăмах мĕнле илтĕнет, çавăн пек çырмала тесе, лажа, курга, ялда, эдем тесе çырса кăтартнă. Çавăн пек çырас пулсан, калаçма та çĕнĕрен вĕренмелле килсе тухать. Çапла вара, В. Йакăвлĕв йулташ çырнă тăрах чăваш грамматикине вĕренме те кирлĕ мар тенийех пулать. Кун пек туни тĕрĕс пулмасть. Вырăс чĕлхинчен тата ытти йут чĕлхесенчен куçнă сăмахсене трактор, молотилка, директор, вожатый, техникум, опыт, элемент, Гоголь учитель, Харьков, Ильич, октябрь, комбайн, класс, силос, чугун, вагон т. ыт. те çаплипех çырмала.

Тĕп чăваш сăмахĕсене вырăс алфавитĕнчи буквăсемпе (В Йакăвлĕв каланă пекех) çырмала, анчах мĕнле илтĕнет, çавăн пек çырмала мар. Сăмахран: лаша, курка, йалта, етем, урапа, мулкач, сыру, чаваш тата ытти те.

Кунашкал туни вăл ачасене грамматикăна вĕренме çăмăл пулать.

К. Йеремейĕв.

Манăн сĕнÿ

Чăваш орфографин тĕп правилисен проектĕнче пысăк çитменлĕхсем те, килешÿсĕр вырăнсем те сахал мар.

Сăмах пуçламĕшĕнче хăçан пысăк саспаллипе çырăсси çинчен асăннă вырăна çакна кăтартса хăварас пулать: обращенисене тата междометисене кăшкăрса калатпăр пулсан, вĕсем хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ, малала пысăк саспаллипе çырма пуçлаççĕ.

Глаголсен халхи вăхăтăн пĕррелĕ хисепри 3-мĕш сăпатĕнче калать, каламасть çырсассăн, мĕншĕн халхи умĕнчи вăхăтра каламастчĕç, калатчĕ тесе çырмала? Ку вĕренекенсене пăтраштаракан йапала.

Пирĕн хутлă предложенисене çырна чухне те чарăну паллисем лартнă çĕрте чылай иккеленÿсем пур. Çавăн пекех кĕнекесем тата хаçатсем çинче те час-часах çав çитменлĕхсене курма пулать.

Урăх çын сăмахлĕ предложенисем çакăн йеверлисем час-часах тĕл пулаççĕ: темшĕн чăвашла çырнă чухне урăх çын сăмахĕ хыççăн кăшкăру палли, ыйту палли зап йатайа тата кавыч ă лартаççĕ, анчах тире лартмаççĕ. Тире лартма пирĕн шутпа кирлех. Çапла вара синтăксисри правилăсем пирки сăмах хускатма та вăхăт.

1937—38 вĕренÿ çулĕнче шкулсем чăваш чĕлхин программисăр, учебникĕсĕр ĕçлерĕç. Паллах, çакăн пек ĕçленине çителекле теме çук. Учебниксем пулманнипе шкулсенче предложенисене хаçатсем çинчен илсе çыртаркаланă. Тепĕр чухне пĕр правила çинех икĕ тĕрлĕ çырнисем тупаннă.

Верен̆у çулĕ пуçланиччен пирĕн шкулсене валли чăваш чĕлхипе çирĕп правиласем, программă пулмала. Çакна кĕтеççĕ шкулсем.

Учител И. Терентйĕв.

Телейлĕ ачасем

Пионерсен республикăри иккĕмĕш лагĕрĕ уçăлчĕ

Атăл урлă каçатăн та, перевоз пристăнĕ тĕлĕнчен тÿрех йалăм вăрманне кайатăн. Кунта, Мильутинри хăма çуракан савăтпа учительсен канмали çурчĕ хушшинче, пионерсен республикăри иккĕмĕш лагĕрĕ вырнаçнă. Лагĕр çав тери илемлĕ вырăнта ларать. Йĕритавра хыр вăрманĕ, йунашарах улăх, сарлака затон...

Иккĕмĕш лагĕр кăçалхи августăн 7-мĕшĕнчепе ĕçлет. Улатăртан, Йетĕрнерен тата Шупашкар хулинчен 50 пионера йахăн пуханнă. Августăн 13-мĕшĕнче лагĕре чаплăн уçрĕç. Каçхине 5 сехет тĕлне пионерсем марш çеммипе линейкă çине утса тухаççĕ. Отряд вожатайĕсем пионерсем лагĕре уçма хатĕрленсе çитни çинчен аслă вожатайа рапăрт параççĕ. Аслă вожатăй лагĕр начальникне рапăртлать.

— Пионерсем, флаг хăпартма хатĕр пулăр!

— Йаланах хатĕр! — илтĕнет пĕр харăс ответ.

Лагĕр çийĕнче хĕрлĕ флаг вĕлкĕшсе тăма пуçлать.

Лагĕрте вăхăт савăнăçлăн иртет. Апат-çимĕç лайăх çитереççĕ. Тĕрлĕрен вăйăсем выляççĕ. Затонра шыва кĕреççĕ, пулă тытаççĕ, кимĕсемпе йаранаççĕ. Кичемлĕнме вăхăт та йулмасть. Пионерсем хор, фото тата авиомоделисен кружокĕсем организациленĕ. Çĕнĕ йурăсем йурлаççе, фотоаппаратпа ÿкерме вĕренеççĕ, авиаци кунĕ тĕлне — августăн 18-мĕшне вĕçекен моделсем хатĕрлеççĕ.

С. Константинăв.

Шупашкар пасарĕ пирки

Шупашкар пасарĕ пирки хула совечĕ те, суту-илÿ организацийĕсем те сăмах тапратмалла. Мĕншĕн тесен, пасар вăл хула халăхĕшĕн, колхозсемпе колхозниксемшĕн те пит кирлĕ вырăн.

Пасара йĕркелес пирки чылай ĕçсем тунă ĕнтĕ. Торцовкă сарнă. Çапах та пасар плошчĕтпе урамне йаланах тасатса тăманни кăмăла хуçать. Тислĕке тата тусана (кĕркунне акă пылчăка) мĕншĕн тăтăшах тасатса тăмала мар вара? Пасар таврашне, унти çырма хĕррине типтерлĕрех сăн-сăпат памала.

Малашне темиçе çын кĕмелĕх буфетпах çитмĕ. Суту-илу организацисен мĕншĕн-ха çакăнта чайнăй уçмала мар? Пирĕн шутпа уçмалах.

Пасар вырăнне лайăхлатсах пырассишĕн пасар директăрĕн вăйлă тăрăшмала. Кунта нумай вăхăт шыранă хыççăн пасар директăрĕ текен çынна мар, вăл ларакан вырăна тупма пулать. Вăл ăçта иккенне çырса хуман, — çынсем ан пĕлччĕр теççĕ пулас. Какай сутакансемпе йунашар сĕтел пур, пукан вырăнне какай касмали йывăç каска. Хут таврашĕ те, ручкă та çук. Каска çинче директăр хăш чухне ларкалать, теççĕ.

Малашне директăрне чăн-чăн пукан çине лартасчĕ, ÿссе пыракан хитре Шупашкар хули валли таса та илемлĕ пасар тăвасчĕ.

У. Й.

Саслă кино — колхозра

ВĂРНАР. Йермошкинă йалĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхоза Вăрнартан куçса çÿрекен саслă кино пычĕ. Колхозниксем екран çинче „Мы из Кронштадта" йатлă чаплă фильм курсан, калама çук кăмăллă пулчĕç. Ку фильм Англи тата Германи оккупанчĕсем граждăн вăрçи вăхатĕнче Петроград çине тапăнса пынине, пирĕн Хĕрлĕ Çар вĕсене çĕнтерÿлĕн çапса аркатнине кăтартса парать.

— Пирĕн çынсем нумай йун йухтарни хăрама каймарĕ, вăл хăйĕн резульдачĕсене пачĕ. Совет çĕрĕ çине тапăнма хăтланакан тăшмансене „Мы из Кронштадта" картинăри пек инкекех пырса çаклатĕ, — теççĕ колхозниксем кино курнă хыççăн.

Фильм тăван çĕршыва йуратма вĕренет, колхозниксен ĕçри хăстарлăхне çĕклет. Колхозниксем тырпулсене кĕске срукрах тата пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕме, государствă умĕнчи мĕн пур парăмсене срукчен парса татма пулчĕç, çакăн пек паха фильмсене час-часах килсе кăтартма ыйтрĕç.

А. Владимирăв.

Районри хаçатсем тăрăх

18.243 тенкĕ выльăв укçи тÿлене

Кăçал Куславкка районĕнчи перекет касси государства займĕсен тĕрлĕрен тиражĕсем тăрăх пĕтĕмпе 18.243 тенкĕ выльăв укçи тÿленĕ. Вăл шутран Иккĕмĕш Пилĕксуллăх (тăваттăмĕш çулхи калăрăм) Займ тăрăх 4.853 тенкĕ, ССР Союзĕн Оборонине Тĕреклетмелли Займ тăрăх 3.280 тенкĕ тÿленĕ. Уйрăм çынсем 500, 200 тата 150 тенкĕшер выльăса илнĕ.

(„Ленин йалавĕпе").

Районри радиовещани

1938 çулти май уйăхĕнче Сĕнтĕрвăррини радиоузелĕтан радио урлă „Йулашки хыпарсем" парас ĕçе организациленĕ. Халхи вăхатра „Йулашки хыпарсен" редакцине радиокорреспондентсенчен çырусем нумай пырса тăраççĕ, çыракансен йышĕ те чылай ÿснĕ. Июль уйăхĕнче радио урлă 57 материал панă. Районри врач Макарăв й. çуллахи вăхатра чир-чĕртен сыхланасси çинчен лекци вуланă. „Йулашки хыпарсен" редакцийĕ микрофон умĕнче сăмах калаттарма колхоз бригадирĕсене, колхоз председателĕсене, агрономсене, врачсене, ударниксемпе стахановецсене йавăçтарнă.

Халхи вăхатра районра пĕтĕмпе 400 радиоточкă тата 100 ытла радиоприйомниксем ĕçлеççĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлана вăхатра 54 суйлав участкинчен 51 участкăра радиопа усă курнă.

(„Ударник").

Çамрăк купăççăсем

Вăрмар районĕнчи Урцарти „Сĕнтерекен" колхозри Иван Федăрăв колхозникăн ачисем çамрăклах купăрулă купăççăсем пулса ÿсеççĕ. Унăн 12 çулхи ывăлĕ — Саюка икĕ ретлĕ купăспа 16 кĕвĕ, 11 çулхи ачи 10 кĕвĕ выляма пĕлеççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те музыка училищинче вĕренме кĕме ĕмĕтленеççĕ.

(„Хĕрлĕ йалав").

КĔСКЕН

Ачасен районри лагĕрĕ. Тутаркас районĕнчи пионерсемпе шкул ачисен 15 кунлăх лагĕрĕ уçăлчĕ. Лагĕрте 52 ача канать.

М Григорйĕв.

Вĕренме кĕрекенсен йышĕ пысăк. Çĕрпÿри фельдшерсен шкулне вĕренме кĕме 415 зайавлени панă. Вĕсенчен 20 ача „хисеплĕ грамăтăпа" вĕренсе тухнă. Вĕсене шкула испытанисĕрех илнĕ.

Г. Шумилăв.

Чиркÿрен клуб. Тойкилтĕ йалсоветĕнче (Тутаркас районĕ) усăсăр ларакан чиркÿрен, халăх йышăннипе, клуб тума тытăннă.

Г. Федăрăв.

Пулни-иртнисем

◆ Шупашкарти милици управленийĕ çак кунсенче Вырăс Тимеш йалĕнчи (Пĕрĕс р.) О. В. Лешчовăна арĕслесе суда панă. Июлĕн 26-мĕшĕнче вăл Шупашкарти „Заготзерно" кантурĕнчен 320 тенкĕ тăракан арифмометр, Безыкорнăв механикăнне портфел, Бочайĕвăнне — кĕпе, калуш тата укçа вăрланă. Июлĕн 29-мĕшĕнче вăлах Шупашкарта пурăнакан И. Кирÿшкин хватерĕнчен йапаласем вăрласа кайма тăнă, анчах ăна килхуçи çавăнтах тытса милици аллине панă. Хăйĕн айăпне Лешчовă пĕтĕмпех йышăннă.

◆ Пикшик йалĕнчи (Шупашкар р.) А. С. Çеменăвă июлĕн 14-мĕшĕнче пед-институт комендантĕ Антонăв патне хватере кĕрес, хăйне ĕçе илме ыйтнă. Çеменăвăна ĕçе илме килĕшнĕ хыççăн Антонăв тем ĕçпе хватертен вăхăтлăха тухса кайнă. Çеменăвă ун хватерĕнчех ларса йулнă. Çак вăхăтра Çеменăвă Антонăвăн кĕсйе сехечĕсене, 160 тенкĕ укçине тата документсем вăрласа тухса тарнă. Августăн 3-мĕшĕнче Шупашкарти уголовнăй розыск ăна шыраса тупса арĕсленĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ

ТЕМЫ

для докладов и бесед к 20-летию Ленинско Сталинского комсомола

(Окончание. Начало см. в №№ 186, 187)

XI. ЖЕНСКАЯ МОЛОДЕЖЬ НАШЕЙ СТРАНЫ НА ПЕРЕДОВЫХ УЧАСТКАХ СОЦИАЛИСТИЧЕСКОГО СТРОИТЕЛЬСТВА

Литература:

В. И. Ленин. Международный день работниц. Собр. соч. т. XXVI, стр. 193—194.

И. В. Сталин. «Вопросы ленинизма» 10-е изд., стр. 536—537, 573—574.

И. В. Сталин. Доклад на Чрезвычайном VIII Всесоюзном с'езде Советов «О проекте Конституции Союза ССР».

И. В. Сталин. Речь на совещании передовых комбайнеров и комбайнерок 1 декабря 1935 г. Партиздат 1937 г.

И. В. Сталин. Речь на приеме колхозниц-ударниц свекловичных полей с руководителями партии и правительства (Ленин—Сталин. Сборник произведений к изучению истории ВКП(б), т. III, стр. 642—643).

А. В. Косарев. «Героические дочери народа». «Правда» от 4/VII-38 г.

«Героические женщины героического народа». «Правда» от 3/VII-38 г. Передовая.

«Женщина в гражданской войне». Изд. «История гражданской войны». 1937 г.

«20 лет советской власти». Статистический сборник. ЦУНХУ, раздел «Женщина в СССР».

XII. ИНТЕРНАЦИОНАЛЬНОЕ ВОСПИТАНИЕ МОЛОДЕЖИ

Литература:

В. И. Ленин, И. В. Сталин. «О молодежи». Партиздат. 1936 г., стр. 114—120, 178—179, 206—207.

В. И. Ленин, И. В. Сталин. «О молодежи». Речь на 1-й Всероссийской конференции работниц социалистической промышленности 4 февраля 1931 г. «Вопросы ленинизма», 10-е изд.

И. В. Сталин. Отчетный доклад XVII с'езду партии. «Вопросы ленинизма», 10-е изд., стр. 596—598.

И. В. Сталин. Речь на совещании передовых колхозников и колхозниц Таджикистана и Туркменистана с руководителями партии и правительства 4 декабря 1935 г. (Ленин—Сталин. Сборник произведений к изучению истории ВКП(б), т. 3, стр. 659—660).

Письмо т. Иванова и ответ т. Сталина. «Правда» от 14/II-38 г.

М. И. Калинин. «О международном положении». Госполитиздат. 1938 г.

Г. Димитров. «Залог победы». Госполитиздат. 1938 г.

«Интернационализм — знамя советского патриота». «Правда» от 6/VII-38 года. Передовая.

XIII. ЗАЩИТА ОТЕЧЕСТВА — СВЯЩЕННЫЙ ДОЛГ СОВЕТСКОЙ МОЛОДЕЖИ

Литература:

В. И. Ленин. «О молодежи». Партиздат. 1936 г., стр. 114—117, 133—151, 196—203.

«Задачи союзов молодежи». Речь на III с'езде РКСМ.

В. И. Ленин (Соч. т. XXX, стр. 403—417. Соч. т. XIX, стр. 323—332).

И. В. Сталин. Речь на VIII Всесоюзном с'езде ВЛКСМ, раздел Г «Крепите боевую готовность рабочего класса». (Ленин—Сталин. Однотомник избранных произведений).

И. В. Сталин. О недостатках партийной работы и мерах ликвидации троцкистских и иных двурушников. Доклад и заключительное слово на пленуме ЦК ВКП(б) 3—5 марта 1937 г. Госполитиздат. 1938 г.

Письмо т. Иванова и ответ т. Сталина. «Правда» от 14/II-1938 г.

К. Е. Ворошилов. «XX лет рабоче-крестьянской Красной армии» и Военно-морского флота». Госполитиздат. 1938 г.

А. В. Косарев. «Сталинская Конституция и советская молодежь». Раздел VI «Защита отечества — священный долг каждого гражданина СССР». «Молодая гвардия», 1938 г.

Программа ВЛКСМ — вводная часть и раздел VI «В области защиты социалистической родины».

Устав ВЛКСМ — вводная часть и раздел «О членах и кандидатах ВЛКСМ и их обязанностях».

XIV. 20 ЛЕТ ЛЕНИНСКО-СТАЛИНСКОГО КОМСОМОЛА

Литература:

В. И. Ленин, И. В. Сталин «О молодежи». Партиздат, 1936 г., стр. 133—151, 196—203, 206.

В. И. Ленин. «Задачи союзов молодежи». Речь на III с'езде РКСМ соч. т. XXX, стр. 403—417.

И. В. Сталин. Речь на VIII Всесоюзном с'езде ВЛКСМ (Ленин — Сталин. Однотомник избранных произведений, стр. 692—701).

И. В. Сталин. О недостатках партийной работы и мерах ликвидации троцкистских и иных двурушников. Доклад и заключительное слово на пленуме ЦК ВКП(б) 3—5 марта 1937 г. Госполитиздат. 1938 г.

Письмо т. Иванова и ответ т. Сталина. «Правда» от 14/II-1938 г.

А. А. Андреев. «Коммунистическое воспитание молодежи и задачи комсомола». Речь на X с'езде ВЛКСМ. «Молодая гвардия», 1938 г.

В. М. Молотов. «К XX-летию Октябрьской революции». Партиздат, 1937 г.

А. В. Косарев. «Отчет ЦК ВЛКСМ X Всесоюзному с'езду ленинского комсомола». «Молодая гвардия», 1938 г.

А. В. Косарев. «Сталинская Конституция и советская молодежь». «Молодая гвардия», 1938 г.

Программа и устав ВЛКСМ.

Решения IV и V пленумов ЦК ВЛКСМ.

«Важнейшая задача комсомола». «Правда» от 5/VII-38 г. Передовая.

«Навстречу 20-летию ленинско-сталинского комсомола». «Правда» от 11/VII-38 г. Передовая.

XV. ВЛКСМ — ПЕРЕДОВОЙ ОТРЯД КИМ'а

Литература:

В. И. Ленин, И. В. Сталин «О молодежи». Партиздат. 1936 г., стр. 111—114, 118—124, 133—151, 195—203.

Письмо т. Иванова и ответ т. Сталина. «Правда» от 14/II-38 г.

М. И. Калинин «О международном положении». Госполитиздат. 1938 г.

Г. Димитров. «Залог победы». Госполитиздат, 1938 г.

А. В. Косарев. Доклад на международном юношеском конгрессе защиты мира. «Комсомольская правда», 5/IX-1936 г.

Хозе Диас, Антон Урибе. «К современному положению в Испании». Госполитиздат, 1938 г.

И. Лихов. «Китайский народ в борьбе за свою независимость». Госполитиздат, 1938 г.

«Молодежь под знаменами». «Молодая гвардия», 1937 г. «О VI конгрессе КИМ'а». Сборник. «Молодая гвардия», 1938 г. (печатается).

* * *

Кроме указанной литературы следует использовать отдельные книги, выпускаемые к 20-летию Ленинско-Сталинского комсомола, и статьи, которые будут опубликованы в газетах и журналах: «Правда», «Большевик», «Спутник агитатора», «Юный коммунист», «Интернационал молодежи», «В помощь партучебе», «Комсомольский пропагандист и агитатор», «Комсомольская Правда».

ПУР ШКУЛСЕН ДИРЕКТĂРĔСЕМ ТЕ

ПĔЛСЕ ТĂМА

„Союзкинопрокатăн" Чăваш уйрăмĕ

республикăри пур шкулсенче те висĕр пленкăлă вĕренÿ тата художествăлă кинофильмсем кăтартассине хăй çине илет

Уйрăм фондăнче пуçламĕш шкулсенчи, тулли мар вăтам шкулсенчи, вăтам шкулсенчи, училищĕсенчи тата аслă шкулсенче пур классенче вĕренекенсем валли те физикăна, химие, естествознание, географие тата ытти предметсене те вĕрентмелли 200 йахăн тĕрлĕ йатлă фильмсем тата художествăлă фильмсем пур.

Фильмсен списокне пĕрре ыйтса йарсанах почтăпа йарса паратпăр.

Шкул директăрĕсем, висĕр пленкăлă „УП—2" [illegible] кинопроекторсем, кинофильмсем илес тесен, кинопроекторсене „Союзкинопрокатăн" [illegible] регистрациленме [illegible] илмелле.

Киноустановкăна регистрацилеме тата кинофильм илесси çинчен ыйтса çырнă зайавленисене çак адрĕспе йамала: гор. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 19. Чувашское отделение „Союзкинопрокат".

Шупашкарти „Пекарь" артельне çăкăр пĕçерекенĕ çĕрте ĕçleme пекарсене пулăшакансем, ларйоксенче çăкăр сутакансем кирлĕ

Чăвашсен Трахом Институтне бухгалтĕр, кассир-счетовод кирлĕ

Адрес: Кăмашнăв, 27.

Дирекци.

Уполномоченный Чувашглавлита № 436

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 882.